им. М. Горького
№
ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитетӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Май 12
ЫТЛАРИКУН
№ 93 (9002)
36-мӗш ҫул тухать.
Хакӗ 20 пус.

Паянхи номерте:

ҪУРАКИ ӖҪӖСЕНЕ ХАВАРТЛАТАР, ӖҪ ПАХАЛАХНЕ ӲСТЕРЕР! Н. Волков.—Ӑмӑрту вӑйӗ (1 стр.).
Ҫӗнтерӳ кунне уявлани (1 стр.).
П. Черемных.—В. И. Ленинӑн «Государство тата революци» ятлӑ генилле ӗҫӗ (2 стр.).
З. Белова.—Социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса пырассишӗн (3 стр.).
Хамӑр республикӑра (3 стр.).
И. Скворцов.—Витесем тӑвас тата вӗсене юсас ӗҫе вӑйлатмалла (3 стр.).
Румынире И. В. Сталин ӗҫӗсене пичетлесе кӑларни (4 стр.).
Чехословакие ирӗке кӑларнӑранпа 8 ҫул тултарнӑ ятпа Прагӑра пулнӑ савӑнӑҫлӑ лару (4 стр.).
Китайри промышленность строительстви (4 стр.).
Албани ялӗсенчи культурӑлла ӗҫ (4 стр.).
Корейӑри ӗҫсем (4 стр.).
Корейӑра перемири ҫинчен пыракан калаҫусем (4 стр.).
Л. А. Пельцих.—Кукуруза—силос тумалли паха культура (4 стр.).

Выльӑх апачӗ хатӗрлессишӗн ҫуркуннех тӑрӑшмалла

Ҫак юлашки ҫулсенче нихӑшӗнче те пирӗн республика выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстермелли плана тултараймарӗ. Выльӑхсен тухӑҫлӑхӗ те ытла та пӗчӗккӗ. Ҫавӑн пирки колхозсем илекен тупӑш та пысӑк мар. Ку ҫитменлӗхсен тӗп сӑлтавӗнчен пӗри выльӑх апачӗ ҫителӗксӗрри пулать.

Кашни колхозрах выльӑх апачӗн ҫирӗп никӗсне туса хума кирли ҫинчен нумайранпа калаҫатпӑр ӗнтӗ. Анчах пур-пӗрех татӑклӑ улшӑну тӳни курӑнмасть-ха. Иртнӗ хӗлле те, унччен хи пекех, республикӑри чылай колхозсем выльӑх апачӗ ҫитмен пирки хытӑ аптрарӗҫ.

Мӗншӗн ҫавӑн пек пулса пырать-ха? Акӑ мӗншӗн: ялхуҫалӑх органӗсем, колхоз председателӗсем, ҫавӑн пекех партипе совет организацийӗсем выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлесси выльӑх-чӗрлӗх йышне тата унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерес задачӑна татса пама кирлӗ тӗп ӗҫ пулнине манаҫҫӗ. Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеме ҫирӗп никӗс тӑвас тӗлӗшпе ҫулталӑкӗпех пикенсе ӗҫлес вырӑнне, чылай колхозсенче ун ҫинчен кӗркунне е хӗле кӗрсен, йывӑрлӑхсем килсе тухсан тин аса илеҫҫӗ.

Ҫитес хӗл валли тата ун хыҫҫӑнхи ҫулсенче те выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеме ҫирӗп никӗс тӑвас тесен, кашни колхозрах халӗ, ҫак кунсенче, пикенсе ӗҫлес пулать. Пуринчен малтан, курӑксем, силос культурисем, тымарҫимӗҫсем ытларах акса хӑварма тата вӗсен тухӑҫлӑхне пур майсемпе те ӳстерме тӑрӑшмалла. Улӑх-ҫарансемпе кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсене лайӑхлатни кирлӗ. Силос хума, ҫавӑн пекех утӑ пухса кӗртме те халех хатӗрленме тытӑнас пулать.

Ҫак ӗҫсене васкаса тумаллине пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ. Анчах, чи лайӑх вӑхӑт иртсе пырать пулин те, нумай колхозсемпе МТС руководителӗсем, партипе совет органӗсем выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫ ҫине халӗ те, иртнӗ ҫулсенчи пекех, кайран тумалли ӗҫ ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ.

Кӑҫал ҫуркунне ир пулчӗ. Ку таранччен пӗр ҫул тата нумай ҫул ӳсекен курӑксене акса пӗтермеллеччӗ. Ҫапах та курӑксем акасси питӗ начар пырать. Пӗр ҫул ӳсекен курӑксем акмалли плана пӗр район та тултарман. Уйрӑмах Улатӑр районӗ чӑтма ҫук юлса пырать. Вӑл майӑн 10-мӗшӗ тӗлне пӗр ҫул ӳсекен курӑксем акма государство панӑ плана мӗн пурӗ те 4,5 процент кӑна тултарнӑ. Хӗрлӗ Чутайпа Елчӗк районӗсем те юлса пыраҫҫӗ—плана 34—39 процент кӑна тултарнӑ. Курӑк вӑрлӑхӗ ҫитмен колхозсене государство кивҫен вӑрлӑх парса пулӑшать. Ҫапах та асӑннӑ районсенчи тата ытти районсенчи колхозсем те государство пулӑшӑвӗпе усӑ курмаҫҫӗ, хӑйсене панӑ вӑрлӑха складсенчен турттарса кайса акмаҫҫӗ.

Хӑшпӗр районсем хӑйсем валли выльӑх апачӗ ытларах хатӗрлессишӗн кирлӗ пек тӑрӑшманни ҫакӑнтан та аван курӑнать: государство курӑк вӑрлӑхӗ кӑна мар, колхозсене тымарҫимӗҫ вӑрлӑхӗ те ҫителӗклӗ парса пулӑшать. Анчах панӑ вӑрлӑха илсе акмаҫҫӗ, тымарҫимӗҫ акмалли план чӑтма ҫук начар тулса пырать. Пӗтӗм республикипе илсен, майӑн 10-мӗшӗ тӗлне тымарҫимӗҫ акмалли плана вӑтӑр процент кӑна тултарнӑ. Хӑшпӗр районсенчи, Сӑмахран, Ҫӗмӗрле, Пӑрачкав, Октябрьски, Муркаш районӗсенчи колхозсем тата та япӑхрах ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем планӑн вунӑ пайӗнчен пӗр пайне те тултарман.

Уйрӑмах силос культурисем акса тӑвас ӗҫ пирки ытӑва ҫивӗччӗн лартас пулать. Ҫӗтеклӗ апатсӑр ӗнесенчен сӗт суса илессине ӳстерме май ҫукки ҫинчен пурте пӗлеҫҫӗ. Кашни колхоз выльӑхсем валли кирлӗ чухлӗ силос хатӗрлеме пултарать. Анчах силос культурисем акмалли плана чылай колхозсем ҫулсерен тултармаҫҫӗ, уй-хирти силос хума юрӑхлӑ ӳсентӑрансемпе усӑ курмаҫҫӗ. Республикӑри колхозсем силос тума хӗвелҫаврӑнӑш ытларах акаҫҫӗ. Хӗвелҫаврӑнӑш иртерех акмалли культура. Ӑна акса пӗтермелле пулӗ ӗнтӗ. Апла пулсан та майӑн 10-мӗшӗ тӗлне силос хума кирлӗ культурӑсем акмалли плана Куславкка районӗ 5 процент ытларах, Етӗрне районӗ 10 процент, Первомайски районӗ 15 процент кӑна тултарнӑ.

Выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсен тухӑҫлӑхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси тӗп вырӑнта пулмалла. Пӗлтӗр республикӑри нумай колхозсем силос культурисемпе тымарҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне ӳстермелли заданисене пурнӑҫламарӗҫ. Сӑмахран, Куславкка районӗнчи колхозсем кашни гектартан тымарҫимӗҫсем мӗн пурӗ те 8 центнер кӑна пухса кӗртнӗ. Курӑксен тухӑҫлӑхӗ те пысӑк мар. Ҫаран ути сахал тухать. Ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем, пӗр енчен, выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсен агротехникине пӑснинчен, вӗсене кая юлса акнинчен, тепӗр енчен, кирлӗ пек пӑхса ӳстерменнинчен тата вӑхӑтра пухса кӗртменнинчен килеҫҫӗ. Улӑх-ҫарансемпе кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсене лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсен планӗ те ҫулсеренех тулса пымасть. Кӑҫал та улӑхсемпе ҫарансене лайӑхлатма, курӑксен тухӑҫлӑхне ӳстерме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерсе пынӑ вӑхӑтрах, вӗсен тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырасси малашне те выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри тӗп задача пулса тӑрать. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн татса пама,—терӗ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мӗш съездӗнче,—чи малтан, пур колхозсемпе совхозсенче те выльӑх апачӗн ҫирӗп никӗсне туса хумалла.

Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлес ӗҫре пирӗн республикӑри чылай колхозсен паха опыт пур. Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС обкомӗ Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз опытне пӗтӗҫтерсе, ятарласа постановлени йышӑнчӗҫ. Ҫак колхозӑн опычӗ пирӗн республикӑри кашни колхозрах выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеме питӗ пысӑк майсем пуррине кӑтартса парать.

«Гвардеец» колхозӑн улӑх-ҫаран пачах ҫук пулин те, вӑл выльӑхсем валли пур йышши апатсем те ҫителӗклӗ хатӗрлет. Колхоз вунӑ уйлӑ пусӑ ҫаврӑнӑшӗ тунӑ, унти икӗ уйра нумай ҫул ӳсекен курӑксем акса тӑваҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, колхоз выльӑх апачӗ хатӗрлемелли сакӑр уйлӑ пусӑ ҫаврӑнӑшӗ туса ӗҫе кӗртнӗ. Ҫавна пула колхозӑн сӗтеклӗ апатсем тата симӗсле ҫитермелли курӑксем ҫулталӑкӗпех кирлӗ чухлӗ пур. Выльӑх апачӗ хатӗрлес тӗлӗшпе колхозра ятарласа организациленӗ бригада хӗлӗн-ҫӑвӗн ӗҫлет. Ку бригадӑна лашасем, ялхуҫалӑх машинисемпе тӗрлӗ ӗҫ хатӗрӗсем, урапа-ҫуна, ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ уйӑрса панӑ.

Партипе совет организацийӗсен, ялхуҫалӑх органӗсен «Гвардеец» колхоз опытне пур колхозсенче пурнӑҫа кӗртмелле тӑвас пулать. Кунпа пӗрлех нумай ҫул тата пӗр ҫул ӳсекен курӑксем, силос хума кирлӗ культурӑсем, тымарҫимӗҫсем акма, улӑх-ҫарансене тата кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсене лайӑхлатма государство панӑ задание пӗтӗмпех тултарма татӑклӑ мерӑсем йышӑнас пулать. Колхозсенче выльӑх апачӗ нумайрах хатӗрлемелле тӑвас шутпа ҫӗртме уйӗсенче выльӑх апачӗ тума планран ирттерсе ҫӗрулми лартмалла, викӑпа сӗлӗ, пӑрҫапа сӗлӗ хутӑштарса акмалла, ир пулакан пӑрҫа тата ытти часрах пулакан культурӑсем акмалла.

Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлес ӗҫ ӑнӑҫлӑ пуласси ҫынсенчен килет. Ҫавӑнпа та ку тӗлӗшпе ӗҫлеме ятарласа уйӑрнӑ бригадӑсемпе звеносене ҫирӗплетмелле, вӗсен ӗҫне тӗрӗс организацилемелле. Выльӑх апачӗ тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗнче акнӑ культурӑсене тата ытти участоксенче акнӑ тымарҫимӗҫсемпе силос культурисене пӑхса ӳстерессишӗн пӗтӗм ответлӑха ҫав бригадӑсемпе звеносем ҫине хумалла.

Выльӑх апачӗ тумалли культурӑсем акса ӳстерме государство панӑ заданисене кашни колхоз тӑрӑх пӗтӗмпех пурнӑҫланипе пӗр вӑхӑтрах, силос хума тата утӑ-курӑксене пуҫтарса кӗртме хатӗрленес ӗҫе те халех тытӑнмалла. Силос башнисем тӑвас ӗҫе кая хӑварма юрамасть. Башнисене зоотехника науки хушнӑ пек тӑвас пулать. Каярахпа вара силос хывас ӗҫе специалистсен хӑйсен ертсе пымалла.

Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли апат ҫителӗклӗ хатӗрлес ӗҫре МТС-сем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Вӗсен выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсене агротехника хушнӑ пек акса хӑварма, пӑхса ӳстерме тата пухса кӗртме колхозсене пулӑшмалла. Уй-хирти нумай ӗҫсене кӑҫал МТС машинисемпе тумалла пулать. Ҫавӑнпа та машина-трактор станцийӗнчи техника уй-хирти ӗҫсене пурне те вӑхӑтра туса ирттерме хатӗр пулмалла.

Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлес ӗҫ ҫинчен колхозсенчи, МТС-сенчи парторганизацисен пӗр самантлӑха та манма юрамасть. Парти организацийӗсен колхоз правленийӗсемпе МТС дирекцийӗсен ӗҫне куллен тӗрӗслесе тӑрас пулать. Кунпа пӗрлех колхозниксем хушшинче массӑлла-политикӑлла ӗҫе куллен вӑйлатса, выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеме массӑсен хастарлӑхне, пуҫарулӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри работниксен ответлӑхне ӳстерсе пымалла.

МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ

Красноармейски районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозри дояркӑсем май праҫникне ӗҫри ҫитӗнӳпе паллӑ турӗҫ. Вӗсем пурте ҫулталӑк пӗтнӗ тӗлелле сӑвакан кашни ӗнерен 1.200 литртан кая мар сӗт суса илме сӑмах панӑччӗ. Ӑмӑртура уйрӑмӑнах Н. Иванова, Р. Евдокимова дояркӑсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем майӑн 1-мӗшӗ тӗлне хӑйсем пӑхакан ӗнесенчен 420—460-шар литр сӗт суса илчӗҫ.

Кӑҫалхи пӑрусене М. Степанова юлташ питӗ тӑрӑшса пӑхать. Пӑрусем пурте сывӑ, тӗреклӗ ӳсеҫҫӗ. Ферма работникӗсем тӑрӑшса ӗҫленипе колхоз майӑн 1-мӗшӗ тӗлне государствӑна сӗт парса татрӗ.

Ҫураки ӗҫӗсене хӑвӑртлатар, ӗҫ пахалӑхне ӳстерер!

Тракторсемпе тухӑҫлӑ ӗҫлемеҫҫӗ

СӖНТӖР. Кӑҫал машина-трактор станцийӗ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, колхозсене 65 процент ытларах ӗҫ туса памалла. Ҫакна пурнӑҫлама МТС-ӑн пур условисем те ҫителӗклӗ. Кӑҫал ҫӗнӗ тракторсемпе ытти ялхуҫалӑх машинисем нумай кӳрсе килнӗ. Ҫӗнӗ техникӑпа тухӑҫлӑ ӗҫлеме опытлӑ кадрсем пур.

Ҫапла пулин те ҫураки ирттерес ӗҫре трактор бригадисем колхозсене ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Ака-суха ӗҫӗсем пуҫланнӑранпа икӗ эрне ытла иртрӗ ӗнтӗ. Ҫак вӑхӑт хушшинче МТС ҫурхи уй-хир ӗҫӗсен планне ҫурри ытларах ҫеҫ тултарнӑ. План тӑрӑх ир акмалли тӗштырӑсене ҫичӗ кун хушшинче акса пӗтермелле пулнӑ.

Тракторсем тухӑҫлӑ ӗҫлеменни чи малтанах ӗҫе тӗрӗс организацилеменнинчен килет. Сӑмахран, Корнеев юлташ ертсе пыракан 11-мӗш трактор бригадине илер. Вӑл «Гигант» тата «Колос» колхозсен хирӗсенче ӗҫлет. Кунта, вунӑ кун хушши учетчик пулман пирки, трактористсем хӑйсем мӗн чухлӗ ӗҫ тунине пӗлмен. Бригада пӗр вӑхӑтрах икӗ колхозра ӗҫлеме пултарать. Ҫапла пулин те «Колос» колхоза тракторсем питӗ кая юлса пычӗҫ. Майӑн 8-мӗшӗ тӗлне кунта тракторпа пӗр гектар та акман. Бригадӑн пӗр сеялки хирте вунӑ кун ытла ӗҫлемесӗр ларать.

Ӗҫри тепӗр чӑрмав — тракторсене лайӑх юсаманни. *Техникӑлла ҫитменлӗхсене* пула, кашни кунах 3—4 трактортан кая мар ахаль ларать. Ҫав тракторсене ӗҫе хутшӑнтарас тӗлӗшпе МТС дирекцийӗ тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмасть.

Трактор бригадисем колхозсемпе тунӑ договора вӑхӑтра, лайӑх пурнӑҫлама тивӗҫлӗ. Тракторсем колхозсенче договорта пӑхнӑ вӑхӑтра ӗҫлемелле. Анчах трактористсем ҫак йӗркене пӑсаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем хӑш колхозра ӗҫлес килнӗ ҫавӑнта ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавна пула Мичурин ячӗпе, Киров ячӗпе тӑракан, «Ленинский путь» колхозсенче тракторсемпе ӗҫлеме тытӑнманпа пӗрех.

МТС-ра лайӑх ӗҫлекен трактористсем те пур. Ермолаевпа Лаврентьев юлташсем ертсе пыракан бригадӑсенчи трактористсем пурте пекех ӗҫ нормине ӑнӑҫлӑ тултарса пыраҫҫӗ. Анчах вӗсен паха опытне ытти бригадӑсене сармаҫҫӗ. МТС директорӗ А. Кушников юлташ тата ытти специалистсем ҫураки ӗҫӗсене ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Агротехникӑна пӑсмалла мар

ЭЛӖК. Колхозсен уйӗсенче хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем, машина-трактор станцийӗнчи механизаторсем ҫуракине кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттерессишӗн ӑмӑртаҫҫӗ. Ҫак ӑмӑртура малта пыракан колхозниксемпе МТС механизаторӗсем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. «Дружба», «Динамо», «Красная Чувашия», «Красный Октябрь», Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем ирхи тӗштырӑсене кӗске срокра акса пӗтерчӗҫ. Чылай колхозсем ҫураки планне пур культурӑсем енӗпе те тултарма, тулӑпа техникӑлла культурӑсем акмалли плана май килнӗ таран ирттерсе тултарма тӑрӑшаҫҫӗ. «Дружба», «Динамо», «Красная Чувашия» колхозсем тулӑ акмалли плана ирттерсе тултарнӑ.

Ҫуракинче малта пыракан колхозсем, тӗштырӑсене акса пӗтернӗ хыҫҫӑн, ҫӗрулми лартма тата техникӑлла культурӑсем акма васкаса ҫӗр хатӗрлеҫҫӗ. Шверник ячӗпе тӑракан колхозри Михайловпа Скворцов юлташсем ертсе пыракан бригадӑсенчи колхозниксем ҫӗрулми лартмалли тата кантӑр акмалли вырӑна тислӗк сараҫҫӗ, сарнӑ хыҫҫӑнах сухаласа ҫӳрелеҫҫӗ.

Колхозниксемпе механизаторсен ӗҫри туслӑхӗ ҫирӗпленсе пырать. Механизаторсем колхозсене вӑйлӑ тырпул туса илме пулӑшаҫҫӗ, ҫӗр ӗҫӗн пысӑк пайне машинӑсемпе тӑваҫҫӗ. Г. Федоров, Н. Тимофеев, А. Федоров, С. Миронов тата ытти чылай трактористсем малтанхи кунсенчен пуҫласах ӗҫ нормине ирттерсе тултарса пыраҫҫӗ. Ф. Сильвестров трактористӑн сменӑра 6,5 гектар сухаламалла. Вӑл кулленех 8—9-шар гектар сухалать. Ӑмӑртура уйрӑмах 14-мӗш трактор бригади паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлет. В. Антонов «ДТ-54» тракторпа кунне 47—48-шар гектар культиваци тунӑ, А. Васильев юлташ икӗ сеялкӑпа ӗҫлесе талӑкра 36 гектар вырӑнне 52—53 гектар тырӑ акнӑ. В. Антонов тракторист малтанхи пилӗккунлӑхра 37 ӗҫкунӗ тунӑ. Бригада тӑрӑшса ӗҫленипе «За мир», «Дружба» тата Жданов ячӗпе тӑракан колхозсем тӗштырӑсене чи кӗске срокра акса пӗтернӗ.

И. Кузьмин юлташ ертсе пыракан 14-мӗш трактор бригадинчи механизаторсене тухӑҫлӑ ӗҫлеме пур майсене те туса панӑ. Машинӑсене вӑхӑтра пӑхса ҫу сӗреҫҫӗ. Вӗсемпе ҫӗрле те, кӑнтӑрла та ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах ҫураки ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те нумай-ха. «Красная заря» колхозра ҫуртри акас ӗҫ сӗлӗ вӑрлӑхӗ ҫитменнипе чарӑнса тӑнӑ. Сӗлӗ вӑрлӑхне хӑвӑрт сортлаттарма тивнӗ. Анчах, ӗҫе организацилес вырӑнне, уй-хир бригадин бригадирӗ Иванов ӗҫкӗре ҫӳренӗ.

Районти хӑшпӗр колхозсенче ҫураки ӗҫӗсене хӑвӑртлатас тӗлӗшпе колхозсен сеялкисемпе ҫителӗклӗ усӑ курмаҫҫӗ, нумай бригадӑсем агротехникӑна пӑсса ӗҫлеҫҫӗ. «За мир» колхоз правленийӗ сеялкӑсене юсаттарман, йӑлтах тракторсем ӗҫлесе парасси ҫине шаннӑ. Тракторпа акма май килмен вырӑнсенче вара пӑрҫапа ытти хӑшпӗр культурӑсене алӑпа акнӑ. Ҫакӑн пек тунине хытӑ сивлес пулать.

Т. МАЙОРОВ.

Ҫуртри калчисене удобренисем парӑҫҫӗ

ИШЛЕЙ. «Сталинская гвардия» колхоз, МТС-ӑн Шаров юлташ ертсе пыракан трактор бригади пулӑшнипе, ҫуртри акмалли плана кӗске срокра, лайӑх пурнӑҫларӗ. 360 гектар ҫинчи ҫурхи тырӑсем лайӑх шӑтса тухрӗҫ. Колхоз правленийӗ бригадӑсен ӗҫне уйра пӑхса акма йышӑнчӗ.

Бригадӑсем халӗ ҫуртри калчисене минераллӑ удобренисем сапса параҫҫӗ. Ҫак ӗҫе колхозниксене пурне те хутшӑнтарнӑ. Коммунист В. Иванов юлташ ертсе пыракан бригадӑри колхозниксем 80 гектар ҫинчи ҫуртри калчисене азотлӑ тата калиллӗ удобренисем сапса пачӗҫ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем техникӑлла культурӑсемпе тымарҫимӗҫсене тата пахча ҫимӗҫсене вӑхӑтра акса хӑварма тӑрӑшаҫҫӗ. Бригадӑсем хушшинчи социализмла ӑмӑрту кунран-кун сарӑлса пырать.

«Сталинская гвардия» колхоз членӗсем вӑйлӑ тырпулшӑн тӑрӑшса хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Ф. ОЛАНГИН.

Махорка акмалли плана тултарнӑ

УЛАТӐР, майӑн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Улатӑрти махорка совхозӗ майӑн 9-мӗшӗнче пӗрчӗллӗ тырӑсем тата нумай ҫул ӳсекен курӑксем акмалли плана тултарчӗ. Совхоз майӑн 11-мӗшӗ тӗлне махорка акмалли плана та тултарчӗ. Пурӗ 200 гектар махорка акнӑ.

П. КОРОЛЬКОВ,
совхоз директорӗ.

Ҫӗнтерӳ кунне уявлани

Майӑн 9-мӗшӗнче Совет ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра Совет Союзӗ пӗтӗм тӗнчипе историлле ҫӗнтерӳ тунӑранпа 8 ҫул тултарнине палӑртрӗҫ.

Ҫак кун Мускаври предприятисемпе учрежденисенче, аслӑ шкулсенче, ҫар чаҫӗсенче Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ӑнӑҫлӑ вӗҫленнӗренпе 8 ҫул тултарнӑ ятпа докладсем, калаҫусем, лекцисем пулса иртнӗ. Рабочисен клубӗсенче, культура ҫуртӗсемпе дворецӗсенче савӑнӑҫлӑ ларусем пулнӑ, ӗҫҫыннисем Совет Союзӗн Геройӗсемпе тӗл пулнӑ.

Совет Ҫарӗн Центральнӑй музейӗнче халӑх нумай пулнӑ. Мускав гарнизонӗнчи салтаксем, офицерсем, генералсем, ҫавӑн пекех тата Мускав хулинчи рабочисем, служащисем, шкул ачисем совет халӑхӗ хӑйӗн Тӑван ҫӗршывӗн чыслӑхӗпе ирӗклӗхӗшӗн тата никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешсе мухтавлӑ ҫӗнтерӳ туни ҫинчен калакан экспонатсемпе паллашнӑ.

Каҫ пулса ҫитсен столицӑри пиншер ӗҫҫыннисем урама, Мускав-юханшыв хӗррине тухнӑ. Каҫхине 10 сехетре малтанхи залп кӗрлесе каять. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици — Мускав Ҫӗнтерӳ Кунӗ ячӗпе артиллерирен вӑтӑр хутчен персе салют парать.

Ҫӗнтерӳ Кунне Ленинград ҫыннисем савӑнӑҫлӑн уявланӑ. М. Горький ячӗпе тӑракан культура дворецӗнче Кировски тата Ленински районсенчи ӗҫҫыннисем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсемпе тӗл пулнӑ.

Ҫак чаплӑ куна Украина столицинчи ӗҫҫыннисем анлӑн палӑртнӑ. Майӑн 9-мӗшӗнче Ученӑйсен ҫуртӗнче ӗҫҫыннисем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ геройӗсемпе тӗл пулнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ Шутов, Совет Союзӗн Геройӗ Квитинский тата ыттисем те хӑйсем аса илнисене каласа панӑ.

Сталинград хулинчи мӗнпур районсенче массӑллӑ савӑнӑҫ пулса иртнӗ. Хула садӗнче ҫамрӑксем Сталинградшӑн пынӑ ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ паттӑрсемпе тӗл пулнӑ.

Минск хулинчи ӗҫҫыннисем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ историйӗн Белорус государство музейӗнче ҫӗнӗрен уҫӑлнӑ Ҫӗнтерӳ залӗнчи ҫӗнӗ экспонатсемпе паллашнӑ.

Брест хулинчи ӗҫҫыннисем майӑн 9-мӗшӗнче мухтава тухнӑ Брест крепоҫӗн стени патӗнче пулса, Тӑван ҫӗршывшӑн хӑйсен пуҫне хунӑ герой-пограничниксен вилтӑпри ҫине чечек кӑшӑлӗсем хунӑ.

Союзлӑ республикӑсен столицисенче, ҫавӑн пекех тата герой-хуласенче — Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессӑра Ҫӗнтерӳ Кунӗ ячӗпе каҫхине артиллери салючӗсем панӑ.

(ТАСС).

Ӑмӑрту вӑйӗ

Колхоз председателӗ Лукин юлташ ялта ҫук, вӑл уй-хирте ӗҫлекен колхозниксем патне кайнӑ. Правлени канцелярийӗнче партбюро секретарӗ Синичкин тата бюро членӗ, колхоз бухгалтерӗ Филиппов юлташсем уй-хир бригадисен хушшинче пыракан социализмла ӑмӑртура хӑшӗ мисемӗш вырӑн йышӑннине кӑтарту хӑми ҫине ҫырма сводка хатӗрлеҫҫӗ.

Ӑсталӑхпа ҫырса ҫапнӑ лозунгсем, тӗрлӗрен плакатсем колхозри пуҫламӑш парторганизаци социализмла ӑмӑртӑва пуҫарса, ертсе пыма тӑрӑшнине кӑтартса параҫҫӗ. Пурне те курӑнмалли вырӑна «Сталинец» колхоз членӗсем 1953 ҫулта мӗнле ҫитӗнӳсемшӗн кӗрешме обязательство йышӑннине ҫырса ҫапнӑ.

Обязательствӑна малтан пилӗк ялти бригадӑсенче кашниншне уйрӑммӑн, ун хыҫҫӑн пӗрлехи пухура тӗплӗн сӳтсе явнӑ. Пытарма ҫук, иккӗленсе тӑракансем те пулкаланӑ. «Ҫанталӑк мӗнле пулать вӗт», «туман тиха пилӗкне хуҫас мар», тенӗ ун пек ҫынсем. Вӗсене пысӑк чӑтӑмлӑхпа ӑнлантарса пама, ӳкӗте кӗртме, ятлама та тивнӗ.

Мӗнпур вӑйсене шутласа пӑхнӑ хыҫҫӑн колхозниксем кӑҫал ялхуҫалӑх культурисене кашни гектар пуҫне ҫакӑнтан кая мар туса илме йышӑннӑ: ыраш—18, ҫурхи тулӑ—16, урпапа сӗлӗ, пӑрҫа—15, кантӑр вӑррипе сӳсӗ—5-шер, ҫӗрулми—150, выльӑх кӑшманӗ—230 центнер.

Бригадӑсенчен панӑ сведенисене тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, ӑмӑрту мӗнле пынине кӑтартакан цифрӑсене кӑтарту хӑми ҫине ҫырса хучӗҫ. Иртнӗ пилӗккунлӑхра Ҫӗньялти В. Иванов юлташ ертсе пыракан бригада, ҫураки планне 84 процент тултарса, пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Иккӗмӗш вырӑнта — Кӳльхӗрринчи М. Хлебнов юлташ бригади.

— Стена хаҫачӗн черетлӗ номерне кӑларасчӗ, — терӗ партбюро секретарӗ.— Иванов юлташӑн опычӗ ҫинчен лайӑхрах каласа кӑтартмалла. Семенов юлташ ҫинчен ҫырсан та пӑсмасть, пӗрчӗллӗ тырӑсене акса пӗтерчӗ, халӗ силослӑх культурӑсем акать. Критиклемеллисем те сахал мар.

Партбюро панӑ поручение пурнӑҫласа, Филиппов юлташ «Сталинец» стена хаҫачӗн редакторӗ пулса ӗҫлет. Карай ялӗнче вырнаҫнӑ правленире тухса тӑракан хаҫата ытти тӑватӑ ялти колхозниксем килсе вулаймаҫҫӗ ӗнтӗ. Анчах хаҫата пурин патне те ҫитермелле. Ку ыйтӑва татса пама та май тупнӑ. Машинкӑпа пичетлесе, хаҫата 6 экземпляр кӑлараҫҫӗ те, бригадӑсем тӑрӑх валеҫсе параҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, уй-хир тата трактор бригадисенче пурӗ 8 «боевой листок» тухса тӑрать.

Колхоз председателӗ Егор Лукич кӑнтӑрла иртсен тин хиртен трактор бригадин бригадирӗпе Белов юлташпа пӗрле таврӑнчӗ. Ҫичӗ уй-хир бригадин тата пӗр трактор бригадин ӗҫне ҫак хӗрӳллӗ тапхӑрта тӗрӗслесе тӑрасси ҫӑмӑл мар, кун каҫиччен чылях ӗшентерет. Анчах парти пирвайхи ӳсӗмсемпе лӑпланса тӑма хушмасть, ҫураки ӗҫӗсен срокне май килнӗ таран кӗскетме чӗнет. Председательпе бригадир тракторсемпе туллинрех усӑ курасси ҫинчен сӳтсе явма тытӑнчӗҫ.

Иртнӗ ҫулта трактор бригади япӑх ӗҫлени колхоза хытах чӑрмантарнӑ. Ҫураки ӗҫӗсем хӗрсе пынӑ вӑхӑтра пӗр пӑлахай тракторист «СТЗ-НАТИ» трактор ҫинче виҫӗ хутчен авари тунӑ. Бригадирӗ, хӑй те дисциплинӑна хисеплеменскер, механизаторсем хушшинче ҫирӗп йӗрке туса хума тӑрӑшман.

Кӑҫал, акӑ, пачах урӑхла. Ҫӗнӗ бригадир, КПСС членӗ Павел Анисимович Белов юлташ тракторсене пӗр кӑлтӑксӑр ӗҫлеттерме пур мерӑсем те йышӑннӑ. Пирвайхи кунтан пуҫласах механизаторсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ. 500 ытла гектар ҫинче культиваци тунӑ, 300 ытла гектар ҫинче чи лайӑх срокра акса панӑ. Иртнӗ ҫулта кая юлнӑ бригада кӑҫал, коммунист ертсе пынипе, малтан малалла шанчӑклӑн пырать.

Правленипе партбюро колхоза ертсе пырас ӗҫӗнчи паллӑ енӗ вӑл—вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме колхозниксен йышлӑ массисене организацилеме пултарни.

— Колхозра радиоузел тусан тата пилӗк ялти колхозниксен килӗсене радио кӗртсен, унӑн пӗлтерӗшӗ паянхи пек пысӑк пуласси пирвайях эпир хамӑр та лайӑх чухламан пулӗ,—терӗ партбюро секретарӗ. — Халӗ вӑл пире питӗ пысӑк пулӑшу кӳнине куллен курса тӑратпӑр.

Кӗрхи тырӑ калчисене удобренисемпе апат пани тырпул тухӑҫлӑхне ӳстермелли лайӑх меслет пулни ҫинчен бригадӑсенче малтанах калаҫусем ирттернӗ, ҫак ӗҫе пурне те хутшӑнма сӗннӗ. Апрелӗн 12-мӗшӗнче радиоузел урлӑ мӗнпур колхозниксене тепӗр кунне ирех калчасене апат пама уй-хире тухма чӗннӗ. Апрелӗн 13-мӗшӗнче ирех 400 ытла колхозник кунтӑксемпе витресем йӑтса, харпӑр хӑй бригадисен уй-хирӗсене тухнӑ. 4—5 кун хушшинче вӗсем 223 гектар ҫинче ыраш калчине, 20 гектар ҫинче кӗрхи тулӑ калчине тӗрлӗ удобренисемпе апат панӑ.

Ҫураки ӗҫӗсене май килнӗ таран кӗске срокра ирттерес, агротехника требованийӗсене тӳррӗн пурнӑҫлас тесе, «Сталинец» колхоз членӗсем тата механизаторсем вӑя хӗрхенмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ.

150 гектар ҫинчи тулла чи лайӑх срокра тата хӗреслӗ майпа акнӑ. Тулӑпа сӗлӗ, урпа вӑрлӑхӗсене акас умӗн хӗвел ҫинче ӑшӑтнӑ, яровизациленӗ, формалинпа чӳхенӗ, пӑрҫа вӑрлӑхне нитрагинпа хутӑштарнӑ. Яровизаторсемпе химизаторсем пурӗ 35 колхозник хӑйсен чӑтӑмлӑхӗпе ӑсталӑхне кӑтартса панӑ.

Ир акмалли культурӑсем вӑхӑтра, лайӑх ҫемӗҫтернӗ тӑпра ҫине акӑнчӗҫ. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли ытларах апат хатӗрлесси ҫине кӑҫал уйрӑмах тимлӗн пӑхаҫҫӗ. Тымарҫимӗҫсем—12, силослӑх культурӑсем—12, пӗр ҫул ӳсекен курӑксем 15 гектар акнӑ. Нумай ҫул ӳсекен курӑксем планран чылай ирттерсе акнӑ. Колхоз курӑксенчен пуян. Ҫулмалли клевер кӑна 198 гектар пулать.

Умра тата пысӑкрах ӗҫсем тӑраҫҫӗ. 100 гектар ҫинче ҫӗрулми лартмалла, 60 гектар ҫинче кантӑр акмалла, пурӗ 5 гектар ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче уй-хире хӳтӗлемелли вӑрман тӑрӑхӗ чӗртмелле.

«Сталинец» колхоз, хӑйӗн кӳршисем пекех, кантӑра ҫавӑн чухлӗ пысӑк ҫӗр лаптӑкӗ ҫине кӑҫал пирвайхи хут акать. Кун пирки пухусенче хӗрӳллӗ калаҫусем те пулнӑ. Акса хӑварасси йывӑр мар ӗнтӗ, планпа та пӗр кун хушшинче акса пӗтерме палӑртнӑ. Анчах 60 гектар ҫинчи кантӑра вӑхӑтра татма, шыва хутса кӑларма, унтан типӗтсе тылллама вӑй ҫитерсе пулӗ-ши?

Лукин юлташ колхоз председателӗсен республикӑри канашлӑвӗнче Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ В. Зайцев юлташ каланӑ сӑмаха аса илтерет. Социализмла Ӗҫ Геройӗ хӑйсем кантӑртан илекен тупӑша миллион тенке ҫитерме задача лартни ҫинчен каланӑ, хӑйсен пуян опычӗпе паллаштарнӑ.

— Пире ҫавӑн пек ырӑ тӗллев лартма кам чарать?—тет партбюро секретарӗ. — Кантӑртан ҫур миллион тенкӗ тупӑш илмеллех.

Тухӑҫлӑ кантӑр туса илме колхозра пур енлӗ мерӑсем те йышӑнаҫҫӗ. Ӑна акма чи лайӑх участоксем уйӑрнӑ, тарӑн сухаласа акнӑ, культиваци умӗн тӑкма ҫӗрсе ҫитнӗ тислӗк тата пӗрчӗллӗ суперфосфат ҫителӗклӗ хатӗрленӗ.

Колхоз производствинче хастарлӑ ӗҫпе мухтава тухнӑ коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тӑман колхозниксемпе колхозницӑсем речӗпех. Кашнин ҫинчен уйрӑммӑн каласа кӑтартма пулӗччӗ.

Г. Евдокимов коммунист ҫинчен сӑмах хускатсан, колхоз председателӗ те, ыттисем те пӗр пек каларӗҫ:

— Ун пек тимӗрҫ пирӗн таврара пулман-ха.

Евдокимов юлташ лайӑх тимӗрҫӗ ҫеҫ мар, хӗрӳллӗ агитатор та. Колхозниксене ялхуҫалӑх машинисемпе тухӑҫлӑ ӗҫлеме тата упрама вӗрентет. Тепӗр вӑхӑтра вӑл хытӑрах калани хӑшпӗрисен кӑмӑлне каймасть пулӗ, анчах обществӑлла пурлӑха упрама тӑрӑшнӑшӑн ӑна пурте юратаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ. Ҫакӑн пек коммунистсем — пуҫламӑш парторганизацин вӑйӗ.

«Сталинец» колхозри партбюро политикӑлла-массӑлла ӗҫӗн пур формисемпе те усӑ курма пӗлеймест-ха. Ҫавна КПСС Красноармейски райкомӗн бюровӗ хӑй те палӑртрӗ. Райком тӑтӑшрах пулӑшсан, ку колхозри партбюро колхоза ертсе пырас ӗҫре тата пысӑк ӳсӗмсем тӑвӗччӗ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамӑр корр.).

«Сталинец» колхоз,
Красноармейски районӗ.

В. И. Ленинăн „Государство тата революци“ ятлă гениллĕ ĕçĕ

В. И. Ленинăн 35 çул каялла пичетленсе тухнă «Государство тата революци» ятлă гениллĕ произведенийĕ марксизма творчествăллăн аталантарнине кăтартакан чаплă тĕслĕх пулса тăрать. Вăл марксизм-ленинизм рабочисен юхăмĕн чи кирлĕ задачисемпе, ĕçсыннисен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешӳпе уйрăмми таччăн çыхăнса тăнине яр-уççăн кăтартса парать. Ленин кĕнеки партие пролетариат диктатурийĕшĕн, çĕнĕ сăнарлă государство—Совет государствин туса хурасшăн кĕрешме хĕçпăшаллантарчĕ.

1914—1918 çулсенчи пĕрремĕш тĕнче вăрçи капитализмăн хирĕçĕвĕсене вăйлатрĕ, халăх массисен пурнăçне начарлатрĕ, историллĕ ĕçсен аталанăвне хăвăртлатрĕ. Тĕнчери пролетарилле революци ӳсе пынă. Ленин çак тапхăрта империализм теорине туса хатĕрлет, социализмла революци çĕнĕ теорине туса хурать, социализм малтанлăха уйрăммăн илнĕ пĕр çĕршывра та çĕнтерме пултарасси çинчен калакан вывода çирĕплетсе парать. Çак теорисем рабочи класăн малашнехи кĕрешĕвне çĕнтерӳвĕн çулĕсене çутатса тăнă.

Капитал тата буржуалла государство ĕçсыннисене пусмăрласа тăрасси вăрçă вăхăтĕнче нихçанхинчен те ытла вăйланса çитнĕ. Хĕвеланăç Европăри социал-демократла партисем марксизмран пăрăнса кайса, пролетариатăн класлă интересĕсене сутнă, империализмла вăрçăра буржуалла правительствăсене пулăшма тытăннă. Вĕсем социал-шовинистла партисем пулса тăнă.

Рабочи класс умне пĕтĕм çивĕччĕшпе çакăн пек ыйту тухса тăнă: буржуази пуç пулса тăнинчен хăтăлас тесен унăн мĕн тумалла? Буржуалла правительствăпа государство çине мĕнле пăхмалла? Государство çинчен тăракан ыйту теориллĕ тата практикăлла-политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту пулса тăнă.

Çак ыйту уйрăмах Российăра 1917 çулхи июль кунĕсем хыççăн, çĕршывра вăхăтлăха контрреволюци çĕнтерни хыççăн çивĕччĕн тухса тăнă. Çак вăхăтра большевиксен партийĕ хĕçпăшаллă восстание хатĕрлеме тытăннă. Ленин, контрреволюцилле Вăхăтлăх правительствăн вăрттăн агенчĕсенчен пытанса ĕçленĕ вăхăтра хăйĕн «Государство тата революци» ятлă теориллĕ ĕçне çырма тытăннă. Çак кĕнекере вăл марксизм государство çинчен вĕрентнине çырса панă тата пролетариатăн революцири задачисене палăртнă. Кĕнеке 1918 çулта, Совет влаçĕ пуçланнă хыççăн пичетленсе тухнă.

Хăйĕн произведенийĕн тĕп задачине Ленин—марксизмăн государство çинчен калакан революцилле вĕрентĕвне тепĕр хут ура çине тăратасси пулать, тесе палăртнă. Чăннипе илсен, Ленин çак кĕнекере марксизм вĕрентĕвне ура çине тăратнă кăна мар тата ăна малалла аталантарнă, марксизм теорине çĕнĕ пуянлăх кĕртнĕ.

Государство—пуç пулса тăракан класăн хĕçпăшалĕ

Социалистла партисен лидерĕсем—вак буржуалла идеологсем—марксизма пăснă, ăна буржуази интересĕсене пăхăнтарма тăрăшнă. Вĕсем государство çине оппортунистла, буржуалла пăхнă, государство вăл классене пĕр-пĕрипе килĕштермелли орган пулать, тесе шутланă. Российăра çакăн пек шухăша меньшевиксемпе эсерсем тытса пынă. Вĕсем буржуалла государствăпа капитализмран социализма куçмалли хатĕр вырăнне усă курма пулать, тесе шутланă.

Каутский ку ыйтăва пăртак чееллĕрех лартнă. Вăл буржуалла государство класлă государство пулнине йышăннă. Анчах вăл, ытти оппортунистсем пекех, буржуалла государствăна çĕмĕрсе тăкассине тăтăклăн хирĕç тăнă.

Ленин Каутскин тата социалистла партисен ытти лидерĕсен оппортунизмне тăрă шыв çине кăларнă, вĕсем марксизмран пĕтĕмпех уйрăлса кайнине кăтартса панă. Энгельс государство природа тĕлĕшĕнчен класлă пулни çинчен, вăл мĕнле пуçланса кайни çинчен каланă тĕп шухăша илсе кăтартса, Ленин çапла çырать: «Государство вăл класлă хирĕçӳсен продукчĕ тата класлă хирĕçӳсем пĕр-пĕрипе килĕшме пултарайманнине палăртса тăни пулать. Государство вăл класлă хирĕçӳсем объективно пĕр-пĕрипе килĕштерме пултарайманни ăçта, хăçан тата мĕн чухлĕ палăрать, çавăнта, çавăн чухне тата çав таран пуçланса каять» (В. И. Ленин. Соч., 25 том, 358—359 стр.).

Государство вăл общество хăйсен интересĕсем тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне хирĕçле классем çине пайлансан пуçланса каять. Ăна экономика тĕлĕшĕнчен пуç пулса тăракан класс хăйĕн интересĕсене хӳтĕлеме, ĕçсынни массисене эксплуатацилеме, вĕсене хăйĕн влаçне пăхăнтарса тăма туса хурать. Ку чухнехи буржуалла государствăсем те, парламентла республикăсем те çав шутах кĕреççĕ. Капитал тытăнса тăрать пулсан, государство влаçĕ кирек мĕнле пулсан та, пролетариат тара кĕрĕшнĕ чура пулса юлать. Буржуалла-демократилле республика пĕтĕм влаçа капитал аллине парать, çавăнпа та пĕр буржуалла правительство тепĕр буржуалла правительствăпа улшăнни те, власть патне буржуалла е сылтăм социалистла партисем пыни те капитал пуç пулса тăрассине тĕкĕнмесĕр хăварать.

Капитализмла çĕршывсенчи ку чухнехи чăн пурнăç çак положение питĕ лайăх çирĕплетсе парать. Францире иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн 20 правительствăна якăн улшăннă, анчах вĕсем тĕрĕссипе капиталистсен ирĕкне, чи малтан, шултра промышленниксемпе банкирсен 200 çемйин ирĕкне пурнăçласа тăраççĕ. Англире консервативла правительство лейбористсен правительствипе е тепĕр майлă та улшăна-улшăна илнĕ, анчах государствăпа унăн органĕсем халиччен пекех капиталистсемпе помещиксен интересĕсене хӳтĕлесе тăраççĕ. США-ра демократилле парти правительстви вырăнне республиканецсен партийĕн правительстви йышăнчĕ. Çакна май правительствăпа министерствăсенче уйрăм çынсем пĕр-пĕрипе вырăнсем кăна улăштарса илчĕç. Анчах государство халиччен пекех капиталистла монополисен политикине пурнăçласа пырать.

Капиталистсен интересĕсене тивĕçтерсе, буржуалла государство çĕршывра «йĕрке» туса хурать. Ĕçсыннисене пусмăрламалли формăсемпе меслетсем улшăнаççĕ, анчах мĕнпур капитализмла çĕршывсенче пусмăр йĕрки çаплипех юлать. Государство, оппортунистсем каланă пек, классене пĕр-пĕрипе мирлештерместь, вĕсен хирĕçĕвне якатать кăна, ĕçсынни массисене эксплуатаци майкăчне кĕртсе ӳкерет, капиталистсемпе помещиксен хуралĕнче тăрать.

Пролетариатăн буржуалла государство çине мĕнле пăхмалла-ха? Ку ыйту пирки Маркс 100 çул каяллах ответ панă. Европăра 1848—1851 çулсенче пулса иртнĕ революцисен опычĕ çакна кăтартса панă, тесе çырать Маркс, пролетариат государствăн хатĕр машинине çаплипех хăйĕн аллине илсе унпа хăйĕн тĕллевĕшĕн усă курма пултараймасть. Буржуази халиччен пулса иртнĕ мĕнпур революцисенче государство машинине лайăхлатса пынă. Пролетариатăн çак машинăна çĕмĕрсе тăкмалла. Пролетариата пусмăрламалли хатĕрсене буржуази пуринчен ытла государствăпа унăн органĕсенче пĕтĕçтерсе тăрать. Çавăнпа та пролетариатăн хăйĕн пĕтĕм вăйне буржуалла государствăна хирĕç тăратмалла, ăна çĕмĕрсе тăкмалла, унăн вырăнне пролетариат диктатури туса хумалла. Çак вывода Ленин марксизм государство çинчен вĕрентнисенче тĕп вырăнта тăраканни пулать, тесе шутланă.

Оппортунистсем пурте Маркcăн çак положенине хирĕç сиксе ӳкнĕ. Бернштейн марксистсене анархизма майлă çынсем тесе элекленĕ. Плеханов 1894 çулта анархизм çинчен çырса кăларнă брошюрăра государствăпа революци çинчен тăракан ыйту пирки тата Париж коммуни урокĕ пирки нимĕн шарламасăр иртсе кайнă. Сасăланă тăрăх парламента мирлĕ майсемпе хăйĕн аллине илсе буржуалла государствăпа усă курассине, Каутский пролетариатăн политикăлла кĕрешĕвĕнчи тĕп тĕллев пулать, тесе шутланă. Пирĕн çĕршыври рабочи класс 1917 çулхи октябрьте пролетариат диктатури туса хунă хыççăн, Каутский, Отто Бауэр тата ытти оппортунистсем—«таса демократие» хӳтĕлекенсем—пролетариатпа Совет Союзĕн чи хаяр тăшманĕсен лагерьне куçса тăчĕç. Ку чухнехи сылтăм «социалистсем», оппортунизм çулĕ çине тăрса, буржуалла государствăна çĕмĕрсе тăкассине ăссăр ĕç, тесе шутлаççĕ. Вĕсем буржуазипе пĕрле буржуалла государство машинине тĕреклетме тăрăшаççĕ.

Анархистсем капитализм условийĕсенче пролетариатăн легальнăй майсемпе усă курма кирлине тата революцие тĕплĕн хатĕрленме кирлине йышăнмаççĕ. Вĕсем государствăна сасартăк, «паян-ыранах» пĕтерме пулать, тесе шутлаççĕ, пролетариат диктатури туса хума кирлине йышăнмаççĕ. Çаксем пурте ĕнтĕ вĕсем общество аталанăвĕн законĕсене ăнланманни çинчен, вĕсен шухăшĕсем субъективла-идеалистла пулни çинчен калаççĕ. Çакă вăл вĕсене политикăра пролетариатпа ĕçсынни массисен тĕп интересĕсене сутасси патне илсе пырать.

Ленин оппортунистсемпе анархистсен шухăшĕн буржуалла пĕлтерĕшне, вĕсен теорийĕсем наукăна хирĕç пынине тăрă шыв çине кăларнă. Ленин çак ыйтăва чăн-чăн наукăлла, марксистла татса панă.

«Государство тата революци» ятлă кĕнекере палăртса панă положенисем капитализмла çĕршывсенчи пролетариата общество аталанăвĕн законĕсене, капитализмран коммунизма куçмалли законсене, буржуалла государствăн класлă природине тĕрĕс ăнланса илме пулăшаççĕ. Вĕсем ĕçсыннисене пусмăрăн çак машинине çĕмĕрсе тăкма кирлине, унăн вырăнне пролетариат диктатури туса хума кирлине кăтартса параççĕ.

Советсем—пролетариат диктатурин государство форми

В. И. Ленин пролетариат диктатурине пур енчен те тĕплĕн никĕслесе парать тата вăл капитализмран социализма куçнă тапхăр [illegible] кирлĕ пулнине кăтартса парать. «Кам та кам классен кĕрешĕвне йышăнассине пролетариат диктатурине йышăнасса таран çитерме пултарать, çав кăна марксист пулать» (Соч., 25 т., 384 стр.).

Оппортунистсем пролетариатăн капиталистсене хирĕç пыракан класс кĕрешĕвне йышăнаççĕ, анчах ăна вĕсем чи кирли патне—буржуазие сирпĕтерсе антарасси патне, вăл класс пулса тăнине пĕтересси патне, капитализмран социализма куçасси патне илсе çитермессĕ. Марксизмăн тĕп пĕлтерĕшĕ, унăн тĕп тĕпшши шăпах та çакăнта пулать ĕнтĕ. Пролетариат диктатури çинчен тăракан ыйту — марксизм-ленинизмра тĕп вырăн йышăнса тăракан ыйту пулать, тесе вĕрентеççĕ Ленинпа Сталин. Пур йышши чăн-чăн халăх революцийĕ те кивĕ государствăна çĕмĕрсе тăкнипе тата çĕнĕ государство туса хунипе вĕçленмелле. Çак государствăн ĕçсыннисене эксплуатацирен хăтăлас ĕçе пурнăçлама пулăшмалла.

Социализм патне куçмалли тапхăр класс кĕрешĕвĕ нихçанхинчен те ытла вăйланса çитнĕ тапхăр пулса тăрать. Çавăнпа та, тесе вĕрентет Ленин, «...çак тапхăрăн государстви те пурĕ-пĕрех çĕнĕлле демократилле (пролетарисемпе пурлăхсăр çынсемшĕн) тата çĕнĕлле диктаторла пулмалла (буржуазие хирĕç)». (Çавăнтах).

Пролетариат кивĕ çара, полицие, буржуалла парламентаризма тата кивĕ чиновниксен аппаратне пĕтерет, анчах масса умĕнче ответ тытакан суйлавлă учреждение сыхласа хăварать, депутатсем тата государство аппаратĕнчи служащисем улшăнса тăмалла тăвать. Государствăна пролетариат халăх массисен ĕçне пăхăнса тăмалла тăвать.

Париж коммуни опычĕ, уйрăмах тата вырăссен революцийĕн опычĕ тăрăх марксизма малалла аталантарса, Ленин пролетариат диктатурин государство форми пулса тăракан Советсене уçса панă. Халиччен марксизмра пурте йышăннă положени вăл Энгельс положенийĕ пулнă. Энгельс пролетариат диктатурин форми парламентла демократилле республика пулса тăрать, тенĕ. Ленин 1905 çулти революци опытне пĕтĕçтерсе тăрăх, Советсем пролетариатшăн восстани органĕ, рабочисен правительствин пуçламăшĕ, революцилле влаçăн пуçламăшĕ пулнине курнă. 1917 çулхи февральти революци опытне вĕреннĕ тăрăх Ленин çакăн пек вывод патне пырса тухнă: пролетариат диктатурин чи вырăнлă политикăлла форми вăл—парламентла республика мар, рабочисемпе хресченсен депутачĕсен Совечĕсем пулса тăраççĕ. Çак положенине вăл хăйĕн Апрельти чаплă тезисĕсенче çырса йĕркеленĕ. Демократилле республика вăл, Ленин шучĕпе, пролетариат диктатури патне пымалли утăм кăна.

Ленинăн çак открытийĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнă. Советсем туса хунипе пирĕн çĕршывра рабочисемпе хресченсен ĕçсыннисен анлă массисемшĕн ăнланмалла та çывăх организаци туянчĕç. Советсем ĕçсыннисен вăйĕсене хăвăрт мобилизацилеме тата вĕсен революцилле хăватне аталантарма пулăшаççĕ. Революци вăхăтĕнче пролетариат диктатурин çавăн пек политикăлла форми пулни ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăнă. Марксизмăн парламентла республика çинчен калакан положенине Ленин хăйĕн Советсен республики çинчен калакан положенийĕпе улăштармасăр пулсăн, çакă вăл пирĕн революцие питĕ пысăк сиен кӳме пултарнă. «Парти тĕттĕмре аташса çӳренĕ пулĕччĕ,—тесе кăтартса парать Сталин юлташ, — Советсем дезорганизациленĕ пулĕччĕç, пирĕн Совет влаçĕ пулман пулĕччĕ, марксистла теори пысăк сухату курнă пулĕччĕ. Пролетариат сухату тунă пулĕччĕ, пролетариатăн тăшманĕсем çиеле тухнă пулĕччĕç». (ВКП(б) историйĕ. Кĕске курс. 341 стр.).

Ленин туса хатĕрленĕ положенисем массăсене мобилизацилекен пысăк вăй пулнă. Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтернĕ хыççăн, çак положение пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах Советсем вĕсем — пролетариат диктатурин вырăссен форми пулса тăраççĕ. Ытти çĕршывсенчи революци, — тесе кăтартса панă В. И. Ленин,—çак çĕршывсен условийĕсемпе тĕнчери лару-тăрăва пула пролетариат диктатурин ытти формисене те кăларса тăратма пултарать. «Капитализмран коммунизма куçни, паллах, политикăлла тĕрлĕ те нумай формăсем кăларса тăратмасăр иртме пултараймасть,—тесе çырнă В. И. Ленин,— анчах вĕсен пĕлтерĕшĕ пурĕ-пĕрех пĕрре пулать: **пролетариат диктатури**» (Соч., 25 т., 385 стр.).

Ленин çакăн пек малашлăха витĕр курса калани пурнăç çирĕплетсе пачĕ. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн, Совет Çарĕ фашистла захватчиксене çĕнтернипе тата массăсен революцилле юхăмĕ çĕкленнипе Европăпа Азири чылай çĕршывсем империализм системинчен тухса ӳкрĕç, вăл çĕршывсенче халăх демократи режимĕ пулса тăчĕ. Марксизм-ленинизм теорине малалла аталантарса, Сталин юлташ пролетариат диктатурин çĕнĕ форми пулса тăракан халăх демократи республики çинчен калакан положение никĕслесе пачĕ.

Рабочи класпа хресченсен союзĕ—пролетариат диктатурин аслă принципĕ

Пролетариат диктатури çинчен тăракан ыйтăва татса панă чухне В. И. Ленин пролетариатпа хресченсем хушшинчи союз çинчен, пролетариат ертсе пыракан союз çинчен çĕнĕ положени туса хатĕрленĕ. «Пролетариат кăна, — тесе çырнă В. И. Ленин, — шултра производствăри хăйĕн экономикăлла рольне пула **мĕнпур** ĕçсыннисемпе эксплуатациленекен массăсене ертсе пыма пултарать» (Соч., 25 т., 376 стр.). В. И. Ленин çапла кăтартса панă: пролетариата государство влаçĕ сирпĕнтерсе антарнă эксплуататорла классем хирĕç тăнине путарса пыма кăна мар кирлĕ, вăл тата ăна «халăхăн пысăк массисене, хресченсене, вак буржуазие, сурмапролетарисене социализмла хуçалăха «йĕркене кĕртес» тĕлĕшпе **ертсе пыма** та кирлĕ» (Çавăнтах).

Ертсе, çул кăтартса пыракан вăй марксистла-революцилле парти пулса тăрать. Вăл пулăшнипе кăна пролетариат влаçа хăй аллине илме пултарать. Вăл кăна, тесе вĕрентет В. И. Ленин, «**пĕтĕм халăха** социализм патне илсе пыма, çĕнĕ строй тума тата ăна çул кăтартса пыма, хăйĕн обществăлла пурнăçне буржуазисĕр тата буржуазие хирĕç тăвас ĕçре мĕнпур ĕçсыннисемпе эксплуатациленекенсен учителĕ, руководителĕ, çулпуçĕ пулма пултарать» (Çавăнтах).

Пролетариатпа хресченсен рабочи класс ертсе пыракан союзĕ, тесе çырнă В. И. Ленин, пролетариат диктатурин аслă принципĕ пулса тăрать. Ленинăн çак положенийĕ пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас тĕлĕшпе партин пĕтĕм ĕçĕнче çирĕп никĕс пулса тăрать. Çак положени урăх çĕршывсенчи мĕнпур коммунистсен партийĕсемшĕн, уйрăмах социализм тăвакан халăх демократи çĕршывĕсенчи тăванла партисемшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сталин юлташ ертсе пынипе Коммунистсен партийĕ Ленинăн çак положенине троцкистла-бухаринла сутăнчăксемпе халăхăн ытти тăшманĕсенчен хӳтĕлесе хăварчĕ.

Рабочи класпа хресченсем хушшинчи союз, тесе кăтартса парать Сталин юлташ, пирĕн çĕршывра капиталистсемпе помещиксене сирпĕнтерсе яма тата социализм çĕнтерме пулăшнă вăй пулнă. Коммунистсен партийĕ рабочисемпе хресченсем хушшинчи союзран никам çĕмĕрейми çирĕп туслăх туса хучĕ.

«Государство тата революци» ятлă кĕнекере В. И. Ленин буржуалла демократин чăн-чăн пĕлтерĕшне уçса кăтартнă, буржуалла демократи суя, кĕтĕк демократи пулнине, пролетариат диктатури кăна класлă обществăра демократин аслă форми пулнине кăтартса панă.

Буржуалла демократи, крепостной стройпа танлаштарсан, пĕр утăм малалла ярса пуснине пĕлтернĕ. Анчах капитализм чухне демократипе эксплуататорла классем кăна усă кураççĕ. Ĕçсынни массисене капиталистсемпе помещиксем чуралантарса çитернĕ, вĕсемшĕн пулсан демократисĕр те ĕçсем нумай. «Капитализм чухне,—тесе кăтартса парать Ленин, — демократизма тара тытнă чуралăхăн, хĕн-хурăн, массăсен чухăнлăхĕн мĕнпур лару-тăрăвĕ хĕссе, пăвса, пӳлсе, илемсĕрлетсе çитернĕ» (Çавăнтах, 457 стр.). Çакăн пирки уйрăмах ку чухнехи капитализмла государствăсем çинчен калани вырăнлă пулать. Капитализмла государствăсенче реакцилле буржуази юлашки демократилле ирĕклĕхсене пĕтерсе пырать, государство аппаратне фашизацилес çул çине тăратать.

Пролетариат диктатури мĕнпур ĕçсыннисене демократипе чăннипе усă курма, çĕршыва тытса тăрас ĕçе тата пĕтĕм обществăлла ĕçе хутшăнма май парать. Вăл халăхăн пĕчĕк пайне кăна демократипе усă курма памасть. Ĕлĕк халăха пусмăрласа пурăннă çынсем тĕлĕшпе демократи прависене хĕснипе пĕрлех, халăх массисене паракан демократи сарăлса, вăйланса пырать.

Пирĕн çĕршывра хăй вăхăтĕнче эксплуататорла классене суйлав прависĕр хăварнă. Вăл вăхăтра пирĕн Тăван çĕршыв çине капитализмла 14 государство тапăнса килнĕ пулнă. Анчах суйлав прависĕр хăварасси вăл, Ленинпа Сталин кăтартса панă тăрăх, пролетариат диктатуришĕн обязательно пулмалли йĕрке мар. Çакăн пек тăвасси граждан вăрçинче пулса тăнă ĕçсем пирки килсе тухнă. Пирĕн саманара халăх демократи çĕршывĕсенче капиталистла элементсем те суйлав правипе усă кураççĕ.

СССР Конституцийĕнче социализмла демократи яр уççăн курăнса тăрать. Социализмла демократизм уйрăмах пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернĕ хыççăн анлăн аталанчĕ. Социализм çĕнтернипе совет обществин моралле-политикăлла пĕрлĕхĕ, СССР халăхĕсен туслăхĕ, советла патриотизм хăватлăн аталанчĕç.

Социализмла государство тата коммунизм строительстви

Государство ĕмĕр-ĕмĕрех пымасть, унăн хăçан те пулсан пĕтсе лармалла. Анчах вăл сасартăк килсе тухнă ĕçсене пула мар, коммунизм тунипе кăна пĕтме пултарать. Социализмла революци буржуалла государствăна пĕтерсе лартать пулсан, социализмла государство вăра кирлĕ мĕнпур условисем пулса çитнĕ хыççăн кăна пĕтсе ларма пултарать.

Ленин коммунизмăн икĕ тапхăрĕ çинчен Маркс вĕрентнине малалла аталантарнă. Общество сасартăк коммунизм патне куçма пултараймасть. Малтан çак обществăн пуçламăш е кĕçĕн сыпăкĕ пулса тăрать. Кунта производство хатĕрĕсем обществăлла харпăрлăх пулса тăраççĕ, çынна çын эксплуатацилесси пĕтет. Социализмăн тĕп принципĕ çакăн пек: «кашнинчен — пултарнă таран, кашнине — унăн ĕçне кура».

Социализмла государство ĕçсыннисен çак правине сыхласа тăрать. Социализм чухне, тесе кăтартса параççĕ Маркспа Ленин, «буржуалла право» юлашкисем сыхланса юлаççĕ. Вĕсем çакăн пулаççĕ: пĕр виçе ĕçшĕн, тĕрĕссипе пĕр тан мар çынсене, пĕр виçе продукт параççĕ. Тĕрĕссипе илсен, пĕр виçе ĕç тума пĕри ытларах вăй хурать, тепри—сахалтарах. Пĕрин çемйи пысăк, теприн — çемйи пачах çук. Çавăнпа та вĕсемшĕн пĕр виçе ĕçшĕн пĕр пек тӳлесен вĕсен ыйтăвĕсене пĕр тан тивĕçтерме пултараймасть. Çапла ĕнтĕ, социализм чухне те пурнăç шайĕ тĕлĕшĕнчен çынсем хушшинче пĕр танмарлăх çаплипех юлать-ха. Анчах социализм чухне эксплуатаци çук. Коммунизм туса çитерсен кăна çынсем пурте пĕр тан пулма пултараççĕ. Ун чухне кашни çын хăйĕн пултарулăхĕ таран ĕçлесе, нимпех хăйĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлисене пурне те илме пултарать.

Халăх тăшманĕсем Ленин социализм чухнехи «буржуалла право» юлашкисем çинчен калаписене пăсма хăтланнă, социализмла правăна буржуалла правăпа пĕр пек тесе пăхма тăнă. Тăшмансем çакăн пек хăтланнине парти тăрă шыв çине кăларчĕ, çак правăсем пачах урăхла пулнине кăтартса пачĕ. Социализмла право капитализм чухне çук тата пулма та пултарайман çĕнĕ йышши обществăлла хутшăнусене палăртса тăрать. Унăн тĕллевĕ социализма тĕреклетсе аталантарасси пулать. Пролетариат хăйпĕр кивĕ формăсемпе, вăл шутра право формисемпе те усă курать, анчах вĕсене çĕнĕ содержани кĕртет.

Коммунизм çинчен çырса, Ленин хăйĕн «Государство тата революци» ятлă гениллĕ ĕçĕнче çакна палăртса хăварать: коммунизм туса хума производительнăй вăйсене нихçанхинчен те ытларах аталантарни, кулленхи кирлĕ япаласем ытлăн-çитлĕн туса кăларни кирлĕ. Обществăн культурăлла-техникăлла шайĕ нихçанхинчен те çӳлĕ пусăмра пулмалла. Ăс-тăн ĕçлевĕпе вăй-хал ĕçлевĕ хушшинчи уйрăмлăх пĕтĕмпех пĕтмелле. Ĕçсыннисене воспитани парас енĕпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Ĕçлев пурне те усă кӳмелли йăла, сывă организма кирлĕ йăла пулса тăмалла. Коммунизм çĕнтерĕвĕ валли демократи нихçанхинчен ытла вăйланса çитни кирлĕ. Кашни çын государствăна ертсе пырас ĕçе хутшăнма пултартăр, çакăнпа пĕрлех вăл этемлĕхĕн общежити правилисене хӳтĕлесе тăтăр. Коммунизмăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш сыпăкĕсем коммунизм обществи экономика, культура тата политика енĕпе мĕнле аталанса çитнине палăртса тăраççĕ.

Социализм пирки буржуази саракан элеке тăрă шыв çине кăларса, Ленин малашлăха витĕр курса гениллĕ çапла каланă: «социализмран кăна хăвăрт, чăннипех массăллă, халăхăн **ытларахăшĕ** хутшăннипе, кун хыççăн пĕтĕм халăх хутшăннипе обществăлла тата уйрăм çынсен пурнăçĕн мĕнпур облаçĕсенче малалла каймалли юхăм пуçланать» (В. И. Ленин. Соч., 25 т. 443 стр.).

Социализм чухне çакăн пек хăвăрттăн малалла кайнине пирĕн çĕршыв лайăх кăтартса парать. Пирĕн çĕршыв совет влаçĕ пулнăранпа промышленноçа, ялхуçалăхне, наукăпа культурăна аталантарас ĕçре улăпла утăмсем турĕ.

Маркспа Ленин вĕрентĕвне Сталин юлташ малалла аталантарчĕ. Вăл социализмпа коммунизм уйрăмлăхĕсене тĕплĕн кăтартса пачĕ, социализмла обществăн экономикăлла законĕсене уçса пачĕ, социализмран майĕпен коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ виçĕ услови палăртса пачĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ ăнăçлăн социализм туса çитерчĕ. Ленинпа Сталин вĕрентнĕ тăрăх ĕçлесе вăл коммунизм çулĕпе малалла пырать.

Социализмла государство обществăна революцилле майпа улăштарса çĕнетмелли хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Пирĕн çĕршыври рабочи класс, Ленин каланă пекех, «хăй политика енĕпе пуç пулса тăнинчен обществăна социализмла улăштарса çĕнетмелли никĕс туса хучĕ...» (Çавăнтах, 461 стр.).

Пролетарилле государство эксплуататорла классене пĕтермелли тата коммунизм обществи тумалли хĕçпăшал пулса тăрать. Çак задачăна татса парсан, государство кирлĕ мар пулса тăрать, вăл пĕтсе ларать. Анчах ку пĕрре те коммунизма куçнă тапхăрта государство вăйсăр пулмалла тенине е хăйĕн органĕсене саланса ямалла тăвас тĕлĕшпе çийĕнчех практикăлла мерăсем йышăнмалла тăвас тенине пĕлтермест. Ĕçсыннисен тăшманĕсем вара, Октябрьти революци çĕнтернĕ хыççăн, шăлах та çавăн пек ĕçсем туса ирттересшĕн пулнă ĕнтĕ. Ленинпа Сталин тăшмансен çавнашкал ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă, партипе совет çыннисене Совет государствине пур майсемпе те тĕреклетме чĕннĕ.

«Государство тата революци» ятлă кĕнекере В. И. Ленин государство пĕтсе ларасси çинчен тăракан ыйтăва капитализмла йĕркелĕх тытăнса [illegible] те хумасăр, социализмла государствăн шалти аталанăвĕ енчен кăна илсе пăхать. Пурнăç Совет Союзне мĕнпур капитализмла çĕршывсем çумне кăларса тăратсан, Ленинпа Сталин, пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва анализ туса, çак ыйту пирки çĕнĕ ответ панă. Сталин юлташ çакна кăтартса панă: Энгельс социализмла революци пĕр вăхăтрах мĕнпур çĕршывсенче е капитализмла тĕп государствăсенче çĕнтернĕ хыççăн государство пĕтсе лармалла, тесе каланă формулăпа социализм пĕр çĕршывра çĕнтернĕ тата капитализмла йĕрткаврăлăх тытăнса тăракан условисенче усă курма çук. Совет марксисчĕсем çакăн пек вывод патне пырса тухрĕç, тесе кăтартса парать Сталин юлташ: «...революци çĕнтернĕ çĕршыв, хăйне капитализмла йĕрткаврăлăх пĕтерсе ан хутăр тет пулсан, хăйĕн государствине, государство органĕсене, разведка органĕсене, çара вăйсăрлатмалла мар, вĕсене пур майсемпе те тĕреклетсе пымалла» (Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем, 50 стр., 1950 çул). Социализмла государство аталанăвĕн диалектики çакăн пек, тесе вĕрентет Сталин юлташ, государство пĕтсе ларасси патне эпир социализмла государствăна вăйсăрлатнипе мар, ăна пур майсемпе те тĕреклетнипе пыратпăр.

Ленин хăйĕн кĕнекин иккĕмĕш пайне çырма хатĕрленнĕ, унта вăл вырăссен революцийĕн опытне итог тăвасшăн пулнă. Анчах вăл çак плана пурнăçлама ĕлкĕреймен. Ку ĕçе Ленинăн ĕçĕсемпе вĕрентĕвне малалла илсе пынă И. В. Сталин пурнăçланă. Вăл социализмла государство çинчен тулли вĕрентӳ туса хатĕрленĕ. Сталин юлташ пролетариат диктатури мĕне пĕлтерни çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă, унăн виçĕ енĕпе системи çинчен каласа панă, пролетариат диктатурин системинче Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан вăй пулни çинчен положени туса хатĕрленĕ, Совет государствин формисем çинчен, унăн аталанăвĕн тапхăрĕсем тата унăн функцийĕсем çинчен тăракан ыйтăва татса панă. Сталин юлташ государствăна коммунизм чухне те, капитализмла йĕрткаврăлăх çаплах сыхланса юлать пулсан, сыхласа хăварма кирли çинчен калакан ыйтăва татса панă.

«СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçре Сталин юлташ Совет государствин социализм тăвас ĕçри уйрăм пĕлтерĕшне кăтартса панă. Социализм тунă чухне мĕнпур йышши эксплуатацие пĕтермелле пулнă тата социализмла хуçалăхăн нимĕнле хатĕр формисем те пулман пирки хуçалăхăн çĕнĕ, социализмла формисене тумалла пулнă. Государство çак задачăна ăнăçлăн пурнăçларĕ, мĕншĕн тесен вăл производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерне обязательно йĕркепе тивĕçтересси çинчен калакан экономикăлла закон çине, халăх хуçалăхне план тăрăх, пропорци йĕркипе аталантарса пымалли çинчен калакан закон çине тата социализмла обществăна аталантармалли çинчен калакан ытти объективла законсем çине таянса ĕçленĕ. Хăйĕн ĕçĕнче пирĕн государство социализмăн экономикăлла тĕп законĕ çине таянса тăрать. Çак законăн пĕлтерĕшĕ акă мĕнле: социализмла производствăна çӳлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ӳстерсе тата лайăхлатса пырса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ӳссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси пулать.

Социализмла государство, надстройкăн политикăлла тĕп пайĕ пулса, производствăлла çĕнĕ хутшăнусене, пирĕн обществăн социализмла базисне тĕреклетсе пырас ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать, вăл пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли тĕп хĕçпăшал пулса тăрать.

Пирĕн государствăна туса хунă аслă Ленинпа Сталин социализмла государствăна тĕреклетсе пыма кирли çинчен кăтартса панисем халĕхи вăхăтра, империализмла государствăсен пуçлăхĕсем Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç çĕнĕ вăрçа хатĕрленнĕ вăхăтра уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Совет çыннисен мирлĕ ĕçне Совет Союзĕн хăватлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсем, тĕреклĕ разведкăпа карательнăй органĕсем кăна тивĕçлипе хӳтĕлесе тăма пултараççĕ. Пирĕн государствăн мир политики тытса пынă вăхăтрах, мĕнпур халăхсемпе килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнă вăхăтрах, кирек мĕнле агрессора та, кирек хăш вăхăтра та вăйлă отпор пама хатĕр тăмалла.

Совет государствин тĕрекĕпе хăвачĕ — пирĕн çĕршывра ăнăçлăн коммунизм тума кирлĕ тĕп услови пулса тăраççĕ, тесе кăтартса парать Маленков юлташ. Çавăнпа та совет гражданĕсен таса тивĕçĕ вăл—Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕтĕм тĕнчери халăхсен мирпе хăрушсăрлăх тĕрекĕ пулса тăракан социализмла государствăна çирĕплетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшасси пулать.

Ленинпа Сталин государство çинчен тата революци çинчен вĕрентни капитализмла çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсене капиталистсемпе помещиксене, империализмла реакцие çĕнтерме пултарассине шанăç парса хĕçпăшаллантарать. Çак вĕрентӳ ĕçсыннисене коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешмелли çула çутатса тăрать.

Профессор П. ЧЕРЕМНЫХ.

Хамăр республикăра

Районти хаçатсенчен

И. В. СТАЛИНĂН ГЕНИЛЛЕ ĔÇНЕ ПРОПАГАНДĂЛАС ТĔЛĔШПЕ ИРТТЕРНĔ ЛЕКЦИСЕМ

И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçне районти ĕçхалăхĕсем хушшинче пропагандăлас тĕллевпе КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ 48 лекци ирттернĕ. Çав лекцисенче пилĕк пине яхăн çын пулнă. Лекцисене КПСС Чăваш обкомĕн лекторĕсем тата КПСС райкомĕн работникĕсем вуланă. Çавăн пекех «Гигант», «Правда», «Красное Сормово», Калинин ячĕпе, Жданов ячĕпе, Сталин ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан колхозсенче тата ытти çĕрте те лекцисем вуланă.

«ОКТЯБРЬ ЯЛАВĔ».

Комсомольски.

ÇĔНĔ СПОРТПЛОЩАДКА

Буденный ячĕпе тăракан колхозра колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ пулнă. Пухура яхăн çамрăксем спортплощадка тума участок уйăрса пама ыйтнине пăхса тухнă. Колхоз членĕсем çамрăксен ыйтăвне тивĕçтерсе участок уйăрса панă. Колхозри çамрăксем спортплощадка тума массăлла воскресниксем ирттернĕ. Вĕсем площадка тумалли вырăна тӳрлетсе тухнă, кивĕ çурта урăх çĕре куçарса лартнă. Футболла, волейболла вылямалли площадкăсем тунă.

Колхозри физкультурăпа спорт коллективĕн 3 волейбол, 1 футбол, 2 сетка тата ытти спорт хатĕрĕсем те пур.

Халĕ «Колхозник» спорт обществин членĕсем çуллахи спорт сезонне уçнă ятпа ирттерекен ăмăртăва хатĕрленеççĕ. Колхозри физкультурниксем Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри футболистсен командипе тĕл пулса вылямалла пулчĕç.

«ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ».

Кӳкеç.

ТИМĔР-ТĂМĂР ПУХМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

Юлашки вăхăтра государствăна тимĕр-тăмăр пухса парас ĕç районта чылай лайăхланчĕ. Апрель уйăхĕнче тимĕр-тăмăр пухмалли плана район 155 процент тултарчĕ. Ку ĕçре уйрăммăнах Мичурин ячĕпе, Хрущев ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те пахă тĕслĕхсем кăтартнине палăртмалла. Çавăн пекех Семеновкăри пуçламăш шкулта вĕренекенсем те тимĕр-тăмăр пухас ĕçре хастарлăн ĕçленĕ.

«КОММУНИЗМШĂН».

Канаш.

ÇĔНĔ УНИВЕРМАГ

Пăрачкав район центрĕнче çĕнĕ универмаг уçнă. Унта ĕçсыннисене кирлĕ промышленность таварĕсем нумай. Çак кунсенче ĕçсыннисем атă-пушмак, кĕпетумтир, хуçалăхра кирлĕ таварсем нумай илеççĕ. Тавар сутасси малтанхи кунсенчен икĕ хут ытларах ӳснĕ.

«ЗНАМЯ КОММУНИЗМА»

ДОЯРКĂСЕН ĔÇРИ ӲСĔМĔ

Буденный ячĕпе тăракан колхозри дояркăсем кăçал сăвакан кашни ĕнерен 2.800 литр сĕт суса илессишĕн кĕрешеççĕ. Çак ăмăртура чылай дояркăсем паха çитĕнӳ турĕç. Пĕррремĕш кварталта кашни ĕнерен вăтам шутпа 722-шер литр сĕт суса илнĕ. Иртнĕ уйăхра ĕнесем сĕт хушнă. А. Селиванова доярка вунă ĕнерен 3.800 литр, З. Андреева—3.125 литр сĕт суса илнĕ. А. Дубинина, К. Молчанова, М. Степанова дояркăсем те задание ирттерсе тултарнă. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне кунта кашни ĕнерен 1.100-шер литр сĕт суса илнĕ.

«КОММУНИСТ»

Етĕрне.



Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн арламалли корпусне çĕр мамăк тюкĕсем илсе килчĕç. Вĕсене Узбекистанпа Таджикистанран тиесе килнĕ. Тюксем, тирпейлĕ чĕркенĕ пулин те, тусанланнă тата вĕсене питĕ çирĕп пирчентерсе çыхнă. Унсăрăн çĕр мамăкне поездпа е баржăсемпе нумай илсе килме çук. Çак çĕр мамăкĕнчен пусма тĕртме юрăхлă çип арличчен, ăна темиçе станок-машина витĕр кăларма тивет.

Йывăр тюксенчи çĕр мамăкне малтан ятарласа лартнă агрегатсем çинче силлесе çемçетеççĕ. Вара ăна юнашар уйрăма илсе каяççĕ. Кунта çĕр мамăкĕ таптармалли машинăсем лартса тухнă. Халĕ ĕнтĕ çак машинăсемпе çĕр мамăкне таптараççĕ. Йĕплĕ лентăсем чĕркенĕ валексем хушшипе тухса, çĕр мамăкĕ пĕрчĕн-пĕрчĕн уйрăлса кăпăшкаланать, çӳпĕсенчен тасалать. Çак машинăсем çĕр мамăк пĕрчисене тӳрлетеççĕ тата татăлса кĕскелнĕ пĕрчĕсенчен тасатаççĕ. Таптармалли машинăран çĕр мамăкĕ тап-таса, лента пек пулса тухать. Çĕр мамăкĕн ленти таз ăшне тулать. Ку вăл лентăсене пирченесрен, çӳп-çап çыпçăнасран сыхлать.

Çĕр мамăкĕ таптармалли машинăсем çиелтен пăхсан тата кăйсен ĕçĕпе ялсенчи çăм арманĕсене аса илтереççĕ. Анчах халăхи пир-авăр комбиначĕсенчи çĕр мамăкĕ таптармалли машинăсене техникăн юлашки çитĕнĕвĕсене шута илсе тунă. Вĕсем питех те хăвătlă тата хăйсем тĕллĕнех ĕçлеме шултараççĕ. Комбинатра кашни работница-чесальщица пĕр вăхăтрах 20 машинăпа ĕçлеме пултарать.

Кашни машина пĕр сехетре 4,5—5 килограмм таран çĕр мамăкĕ таптарса паха чĕртавар туса кăларать.

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи çĕр мамăкĕ таптармалли машинăсене пурне те хамăр Тăван çĕршыври заводсенче туса кăларнă. Вĕсемпе чăваш хĕрĕсем ăста ĕçлеççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕр мамăкĕ таптармалли машина. Унпа Таисия Филиппова ĕçлет. Вăл комбината Шупашкар районĕнчи Томаккасси ялĕнчен ĕçлеме килнĕ. Ĕç нормине яланах ирттерсе тултарать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Улма-çырла питомникĕнче

Сĕрпӳри улма-çырла питомникĕнче çуркуннехи хĕрӳллĕ ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ.

Питомник çĕрĕ 200 гектар ытла шутланать. Унсăр пуçне, улма-çырла сачĕ пур. Унта 35 гектар çинче улмуççисем, 10 гектар ытла тĕрлĕ çырла хунавĕсем ӳсеççĕ. Питомнике сарас тесе кăçал 18 гектар çине çырла хунавĕсем лартса хăварнă.

Улма-çырла питомникĕнче пахча çимĕç культурисем те лартса ӳстереççĕ. Çуркуннехи ăшă хĕвел пăхма тытăнсанах парниксем туса купăста тата помидор вăррисем акса хăварнă. Вĕсен калчисем лайăх çитĕннĕ. Кăçал çак калчасене 70 пин кăк ытла куçарса лартнă.

Питомник çулсеренех республикăри колхозсене темиçе пиншер тĕп тĕрлĕрен улма-çырла йывăççисем сутать. Çавăн пекех кунта пăхса ӳстернĕ йывăççсем Совет Союзĕнчи чылай хуласен урамĕсене илемлетеççĕ. Иртнĕ çулта Горький облаçне, Мари АССР-не, Уралти хăшпĕр хуласене нумай пин тĕп йывăç ăсатнă.

Кăçал Шупашкар хулин урамĕсене илемлетме тĕрлĕ йывăçсем 15 пин тенкĕлĕх, Свердловск облаçĕнчи Çĕнĕ Тагилти металлурги завочĕ валли тополь 10 пин тенкĕлĕх ăсатнă. Çак кунсенче Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз темиçе пин кăк çĕр çырли илсе кайрĕ.

Сĕрпӳри улма-çырла питомникĕ çулсеренех çĕнĕрен те çĕнĕ мичурински сортсемпе пуянланса пырать. Виç-тăватă çул каялла Горькинчи ботанически садран 1.000 кăк çĕнĕ «Красавица загорья» ятлă çĕр çырли илсе килнĕччĕ. Çак сортăн пĕр çырли 30 грамм таять. Халĕ çак паха çĕр çырли курăкне республикăри пур колхозсене те сутаççĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Пĕвесем тăваççĕ

Пирĕн республикăра колхозсен çĕрĕсем çинче 700 пĕве ытла шутланать. Пĕвесенче карас, карп, сазан пулăсем ĕрчетеççĕ. Хăшпĕр колхозсем пулă ĕрчетсе пысăк тупăш илеççĕ.

Канаш районĕнчи «Красное пламя» артелĕн пĕвинче 12 килограмм таякан карпсем тĕл пулаççĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоза та пулă ĕрчетни пысăк тупăш парать.

Пирĕн республикăри колхозсенче те пĕвесем çĕнĕрен тăваççĕ. Кăçал 300 ытла пĕве тума палăртнă.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Ял çĕнелет

ТĂВАЙ. Тушкилти Сталин ячĕпе тăракан колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса пырать. Юлашки икĕ çул хушшинче 335 сысна, 460 сурăх, 5.000 чăх-чĕп валли çĕнĕ витесем тата пăрусем усрамалли пӳрт туса лартнă.

Ял илемленсе пырать. Пĕлтĕр Кĕтне юханшывĕ çинче пысăк гидроэлектростанци туса пĕтернĕ. Халĕ кашни колхозник килĕнче Ильич лампочкисем çутаççĕ, радио калаçать. Ялта радиоузел пур. Стационарлă киноустановка ĕçлет.

Колхозлă ялта культура учрежденийĕсен хисепĕ ӳссех пырать. Сичĕ çул вĕренмелли шкул, вулав çурчĕ, 700 çын вырнаçмалăх клуб, медицина, зоотехникăпа ветеринари пункчĕсем пур. Ял варринче икĕ пысăк магазин уçнă.

Яла илемлетесси кашни колхозникшăн пысăк ĕç пулса тăрать. Урамсен икĕ енĕпе йывăçсем лартса тухнă.

О. САВАНДЕЕВА.

ЛЕКЦИСЕМПЕ ДОКЛАДСЕМ

ÇĔМĔРЛЕ. Вăрманкас ялĕнчи лекторсен ушкăнĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта государство заемĕсем çинчен 5 лекци, 7 доклад тата 31 хутчен калаçусем ирттернĕ. Иртнĕ çулта 19 çын заем облигацийĕсемпе 13 пин тенкĕ выляса илнĕ.

А. АФАНАСЬЕВ.

ТАСС хирĕçлесе калани

Майăн 7-мĕшĕнче «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат, гоминданăн США-ри агенчĕ Веллингтон Ку пĕлтернĕ тесе, суя хыпар пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: иртнĕ çулхи ноябрьте Китай Халăх Республики, СССР тата Демократилле Вьетнам Республики алă пуснă килĕшӳ тăрăх, кирлĕ пулсан, Китай Халăх Республики Индо-Китая 300 пин çынлă çар яма пулнă, СССР вара Вьетнам Республикин пилĕк дивизийĕ валли çар снаряженийĕ пама пулнă, тенĕ.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çав пĕлтерӳ пĕтĕмпех суя хыпар, ăна тĕнчери халăха улталас шутпа пичетлесе кăларнă.

Витесем тăвас тата вĕсене юсас ĕçе вăйлатмалла

Колхозсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне тата вĕсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе партин XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçлас ĕçре выльăх-чĕрлĕх витисем çителĕклĕ пулни тата вĕсене вăхăтра лайăх юсани питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хăшпĕр колхозсенче хĕлле выльăхсем шăнса чирлесси, тепĕр чухне тата вилесси халĕ те пулкалать-ха. Çакă ĕнтĕ, тĕпрен илсен, выльăх-чĕрлĕхе усрамалли витесем кирлĕ пек юсавлă, лайăх тата çителĕклĕ пулманнинчен килет. Витесенче нӳрлĕ, тăвăр, тĕттĕм пулни, витĕр çил вĕрни обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕллехи вăхăтра пăхса усрама çав тери йывăрлатать.

Çавăнпа та ĕнтĕ республикăри малта пыракан колхозсем, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленипе пĕрлех, ферма витисене лайăх тытса тăрассишĕн те, çĕнĕрен çуртсем лартассишĕн те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе вăйлатаççĕ.

Анчах та хăшпĕр районсемпе колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хакламаççĕ-ха. Уйрăм колхозсенче вара выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас тĕлĕшпе, уйрăммăнах, чĕх-чĕп витисене тăвас тĕлĕшпе, чăтма çук япăх ĕçлеççĕ. Хăшпĕр районсенче кăçал та пĕлтĕрхи йăнăшах тăваççĕ: выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас тата вĕсене юсас ĕçе халĕ те тытăнман, вĕсем ку ĕçе кĕркуннене хăварма шутлаççĕ.

Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Кувакино, Чкаловски, Калинино районĕсенчи колхозсем 1952 çулта выльăх-чĕрлĕх витисем тумалли плана 40—86 процент кăна пурнăçларĕç, чăх-чĕп витисем тăвас ĕç вара татах та ытларах юлса пырать. Кăçалхи пĕррремĕш кварталта ку районсенчи колхозсенче пĕр вите те туман.

Республикăри ялпа колхозсенчи строительство ĕçĕсен управленийĕ тата районсенчи унăн пайĕсем организацилле-техникăлла ыйтусем тĕлĕшпе çителĕксĕр ертсе пынине пула, çавăн пекех тата чылай районсен руководителĕсем кирлĕ пек ĕçлеменнине пула, строительство ĕçĕ çав тери юлса пырать. Кăçалхи пĕрремĕш квартал планне колхозсем ĕне витисем тăвас енĕпе 2,8 процент, пăру витисем тăвас енĕпе—60, сурăх витисем тăвас енĕпе—38, кайăк-кĕшĕк витисем тăвас енĕпе 21 процент кăна пурнăçларĕç.

Нумай колхозсенче строительство бригадисене салатса янă. Çапла, сăмахран, Элĕк, Муркаш, Советски, Первомайски, Комсомольски районĕсенчи строительство бригадисем пурĕ те 4—5-шер колхозра çеç юлнă. Красноармейскипе Пăрачкав районĕсенчи колхозсенче вара строительство бригадисем пачах çук. Строительство бригадинче пулнă платниксене хуçалăхри ытти ĕçсене тутараççĕ. Чылай районсенче строительство валли йывăç сахал хатĕрленĕ. Çапла, сăмахран, Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Советски, Тăвай, Чкаловски тата Вăрмар районĕсенчи колхозсем хăйсене уйăрса панă йывăçăн 25 процентне кăна касса турттарнă. Республикăра пурĕ те Елчĕк, Тăвай, Комсомольски тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем кăна выльăх-чĕрлĕх витисем лартма йывăç çителĕклĕ турттарса хатĕрлерĕç. Вĕсем йывăç хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарчĕç.

Сурăхи ĕçĕсене анăçлă туса пынипе пĕрлех, колхозсенче халĕ строительство ĕçне те анлăн сарса ямалла. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, кӳршĕри Мари тата Мордва республикисенчи ĕçхресчĕнĕсемпе ăмăртăва тухса, социализмла обязательствăсем илчĕç. Çав обязательствăсенче выльăх-чĕрлĕх витисем, фермăсенче ытти çуртсем тăвас тата витесене юсас ĕçсене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама палăртнă. Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кашни колхозрах строительство ĕçĕсене халех анлăн сарса ямалла. Райсовет исполкомĕсемпе ялхуçалăх органĕсем колхозри строительство ĕçĕсене сарса пыма колхозниксен массисене мобилизацилемелле. Халĕ ĕнтĕ пĕр тăхтаса тăмасăрах выльăх-чĕрлĕх витисем, силос башнисем тата ытти çурт-йĕрсем лартма тытăнас пулать. Строительствăра вырăнти материалсемпе ытларах усă курмалла, сурăх ĕçĕсене хутшăнман лашасемпе, автомашинăсемпе йывăç турттармалла. Строительство бригадисене çак кунсенчех йĕркелесе çирĕплетмелле, бригадăри çынсене строительство ĕçне тума тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла.

Строительство бригадине çынсем тата лашасемпе машинăсем уйăрса панипе кăна лăпланса лармалла мар. Строительство ĕçне куллен-кун туса пымалла, лашасемпе тата машинăсемпе кирлĕ пек усă курмалла, строительство бригадин бригадирĕсен ĕçе тимлĕн ертсе пымалла, строительство ĕçĕсене вăхăтра пурнăçласа пырассишĕн ответлă пулмалла, бригадăри колхозниксен ĕçне контролĕсе тăмалла.

Бригадир колхозри çĕнĕ строительствăна тата кивĕ çурт-йĕре юсас ĕçе организацилле техника тĕлĕшĕнчен ертсе пырать, çак ĕçĕн пахалăхĕшĕн ответлă пулса тăрать. Вырăнти строительство материалĕсене хатĕрлес ĕçе те бригадирăн ертсе пымалла.

Выльăх-чĕрлĕх витисене, хуçалăхри ытти çурт-йĕрсене типовой проектсем тăрăх туса лартмалла. Проектран пăрănса ĕçлени е проектпа пăхнине туса çитерменни пачах пулмалла мар. Витесен чӳречисене икĕ рама лартас пулать, витесен шалти оборудованине йăлтах туса çитермелле. Райисполкомсен вырăнти стройматериалсене хатĕрлес ĕçе ертсе пымалла, малта пыракан бригадăсен, колхозниксен опытне сармалла, çав опытпа усă курма тăрăшмалла.

И. СКВОРЦОВ,

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Ялпа колхозсенчи строительство ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ.

Социализмла ăмăртăва анлăн сарса пырассишĕн

Халăх хуçалăхне аталантарас ĕçре социализмла ăмăртăва малалла вăйлатни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммунистсен партийĕ ăмăртăва организацилес ĕç çине яланах питĕ тимлĕ пăхнă.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историлле решенисемпе хавхаланса, совет çыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Республикăри нумай предприятисенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсем, съезд кăтартăвĕсене пурнăçласа пырса, социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Фабрикăсемпе заводсенче, стройкăсемпе чугун çул çинче стахановецсен хисепĕ куллен ӳсет, рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем производствăри резервсене палăртаççĕ, ĕç тухăçлăхне хăпартмалли, продукци пахалăхне лайăхлатмалли, чĕртаварпа материалсене перекетлемелли çĕнĕрен те çĕнĕ меслсем тупаççĕ. Ĕçсыннисен творчествăлла пуçарулăхне аталантарма партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсем паха майсем туса пани предприятисене хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăçласа пыма пулăшать.

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи парторганизаци социализмла ăмăртăва кашни рабочие, инженерпа техника тата служащие хутшăнтарма, кашни рабочи валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса пама, малта пыракансен опычĕпе меслетне анлăн сарма тимлĕ тăрăшать. Заводра цехсем, участоксем, бригадăсем тата рабочисем хушшинче вăйлă ăмăрту пырать. 181 бригада пысăк пахалăхлă продукци çеç туса кăларакан бригада ятне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешет. Ертсе пыракан профессисем хушшинче чи лайăх слесарь, токарь, фрезеровщик ятне илессишĕн ăмăрту пырать. Ăмăртăва мастерсем, инженерсемпе техниксем тата ытти работниксем те активлă хутшăнаççĕ.

Завод коллективĕ çулталăкри производство планне пур кăтартусем тăрăх та срокчен тата ирттерсе тултарма социализмла обязательство йышăннă. Кварталти ĕç итогĕсене тĕпчесе тухнă хыççăн, завод коллективĕ тепĕр квартал валли çĕнĕ обязательство илет. Цехсемпе участоксенче тата бригадăсенче обязательствăсене кашни уйăхрах пăхса тухса çĕнетеççĕ.

Ĕçре уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартакансене палăртма цехсенче Хисеп хăмисем тата фотовитринăсем тунă. Цехсем, участоксем, сменăсем задание мĕнле пурнăçласа пынине куллен графиксем çинче палăртаççĕ. Завкомпа дирекци ăмăрту итогĕсемпе тăтăшах интересленеççĕ, малта пыракан цехсене, бригадăсене Хисеп хăми çине кĕртеççĕ, «Сталинец» хаçатра палăртаççĕ.

Социализмла ăмăртăва коммунистсем пуçарса ертсе пыраççĕ. Цехсенчи парторганизацисем хăйсен коллективĕсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма тăрăшаççĕ, профсоюз организацийĕсене ăмăртăва лайăхрах ертсе пыма пулăшаççĕ. Заводри партком хăйĕн ларăвĕсенче ĕç тухăçлăхне ӳстерме, производство новаторĕсен опытне сарма пулăшакан меслсем çинчен тăтăшах сӳтсе явать, цехсенчи парторганизацисен пуçарулăхне ӳстерсе пыма, ăмăртăва ертсе пырас ĕçри формализма пĕтерме тăрăшать. «Сталинец» хаçатпа стена хаçачĕсенче ĕçри çитменлĕхсене хытă критиклеççĕ, малта пыракансен меслечĕсем çинчен тăтăшах çыраççĕ.

Коллективăн политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ пĕрмаях ӳссе вăйланса пынине пула, завод СССР Электростанцисен тата электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисен социализмла ăмăртăвĕнче икĕ кварталта пĕрремĕш вырăна тухрĕ. СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи парторганизаци коллектива производство планне ăнăçлă тултарса пыма, чĕртаварпа материалсем перекетлеме, хăватлă техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттерме, продукци пахалăхне лайăхлатма мобилизацилет. Партипе профсоюз организацийĕсем уйрăмах обязательствăсем илес тата панă сăмаха чыслăн пурнăçласа пырас ĕçе лайăх йĕркелеме тăрăшаççĕ. Вĕсем дирекципе пĕрле массăсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне вăйлатса пыма мĕн кирлине пурне те туса пама тăрăшаççĕ.

Парторганизаци ертсе пынипе фабрикăра малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сарас ĕçе аван йĕркеленĕ. Инженерсем, техниксем тата мастерсем стахановецсен ĕç мелĕсене тĕплĕн сăнаса вĕренеççĕ, çĕршыври малта пыракан фабрикăсен тата производство новаторĕсен опычĕпе интересленеççĕ, кашни рабочи валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса пама тăрăшаççĕ. Стахановецсен опытне сарас тесе, вуншар плакат çырса çакнă.

Парторганизаци кашни рабочие, мастера тата ытти работниксене ĕç çине коммунистла пăхма, çитменлĕхсене хăюллăн критиклеме воспитани парать. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ хыççăн фабрикăра партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕç чылай лайăхланнă. Фабрика пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлет, продукци туса кăлармалли, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли задание тăтăшах чыслăн пурнăçласа пырать. Фабрикăра ĕç нормине тултарман рабочи çукки кунта социализмла ăмăртăва чăнласах лайăх йĕркеленине кăтартать те ĕнтĕ.

Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăра оборудованине лайăх пăхса усрама, вăхăтра юсама, рабочисен ăсталăхне ӳстерсе пыма тимлĕн тăрăшаççĕ. Малта пыракансен опычĕпе паллаштарма стахановла шкулсем уçнă. Час-часах стахановецсен конференцийĕсене ирттереççĕ. Мастер помощникĕсем хăйсен пĕлĕвне семинарта вĕренсе ӳстереççĕ.

Çавăн пек паха тĕслĕхсем республикăра сахал мар. Анчах пур çĕрте те социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе лайăх йĕркеленĕ, рабочисем валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса параççĕ, теме çук. Чылай предприятисенче, уйрăмах вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнчи предприятисемпе промартельсенче плана хисеп енĕпе тултарассишĕн ытларах ăмăртаççĕ, продукци пахалăхне хăпартассине, перекетлĕхе çирĕплетессине, техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттермелле тăвассине пысăка хурса хакламаççĕ. Çавăн пирки предприятисем чи кирлĕ изделисем туса кăлармалли задание пурнăçласа пымаççĕ, чĕртавар, топливо, электроэнерги нормăран ирттерсе расходлаççĕ, брак тăваççĕ, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтермеççĕ.

Социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçри формализма пĕтермен тĕслĕхсем те сахал мар-ха. Хăшпĕр парторганизацисем çав çитменлĕхе хирĕç кĕрешмеççĕ, коллективсен творчествăлла пуçарулăхне вăйлатса пыма тăрăшмаççĕ. Уйрăм завкомсемпе фабкомсем ăмăрту итогĕсене вăхăтра тишкермеççĕ, теприсем панă сăмаха мĕнле пурнăçланине кабинетра, массăсене хутшăнтармасăр пăхса тухаççĕ. Рабочисене, вĕсен профессине тата ĕçри уйрăмлăхне шута илмесĕр, пĕр майлă, стандартла обязательствăсем илме хистенĕ тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ.

Сĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнче цехсене производство заданийĕсене вăхăтра парас ĕçе йĕркелемен, рабочисен пĕрлехи пухăвĕсем тата канашлăвĕсем сайра-хутра çеç пулкалаççĕ, унта çивĕч ыйтусем сахал сӳтсе яваççĕ. Кунти завком ăмăртăва ертсе пырас ĕç çине çиелтен пăхнине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Хисеп кĕнеки çине 1951 çултанпа пĕр стахановецăн, пĕр рационализаторăн хушаматне те кĕртмен. Дирекци тата цех руководителĕсем рационализаторла сĕнӳсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Хăма суракан цехра технологи дисциплинине пăсаççĕ, çавăн пирки производство каяшĕсем нумай пулаççĕ, ĕçе юрăхлă материалсем сахал кăлараççĕ. Йывăç тата хăма склачĕсенче йĕркелĕх çук, учет япăх. 1952 çулта комбинат нормăран ирттерсе 6,5 пин кубометр йывăç расходланă. Кунта нумай станоксене татти-сыпписĕр ĕçлеттермеççĕ, штурмовщинăна пĕтермен. Партбюро тата унăн секретарĕ Серов юлташ çав пысăк çитменлĕхсене пĕтерме, государство дисциплинине çирĕплетме татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ комбинат чылайранпа юлса пырать.

Пăлтĕр Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем Семенов, Галкин юлташсем т. ыт. те пуçарнипе сменăри задание çичĕ сехетре е ултан та маларах пурнăçлассишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. КПСС обком бюровĕ çак патриотла пуçарăва ырларĕ. Завод руководителĕсем çĕнĕ пуçарăва сарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмарĕç, малтанлăха шавланипех ирттерсе ячĕç.

Социализмла ăмăртăва куллен ертсе пырасси, ăна çĕнĕрен те çĕнĕ формăсемпе тата содержанипе пуянлатса пыма предприятисене пулăшасси — министерствăсемпе управленисен тата трестсен чи пысăк тивĕçĕ. Халлĕхе республикăри чылай организацисен руководителĕсем çак ĕç çине формально пăхаççĕ. Пĕрремĕш кварталта пĕр промартель те Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулманни Чăвашпромсовет тата унăн председателĕ Маклашкин юлташ социализмла ăмăртăва сарас ĕçе хакламаннине пĕлтерет те ĕнтĕ.

Вырăнти промышленность министерствин, Чăвашдревпромсоюзăн, Чăваштарпромсоюзăн тата «Чăвашвăрман» трестĕпе «Чăвашлесдрев» трестĕн те хăйсене пăхăнса тăракан предприятисемпе промартельсене техникăлла пулăшу ытларах памалла, малта пыракан коллективсемпе новаторсен опытне анлăн сармалла, уйрăм предприятисем юлса пынине пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Вырăнти промышленность министерствипе Чăвашдревпромсоюзăн уйрăмах совет çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес, куллен кирлĕ таварсен пахалăхне лайăхлатас, мастерскойсен ĕçне аванлатас тĕлĕшпе хăйсен ответлăхне ӳстермелле.

Социализмла ăмăртăва вăйлатма, малта пыракансен опытне анлăн сарма фабкомсемпе завкомсене куллен пулăшасси — профсоюз обкомĕсен хисеплĕ тивĕçĕ. Халлĕхе чылай профсоюз обкомĕсем производство новаторĕсен опытне пĕтĕçтерсе сарас тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне кăтартмаççĕ, ĕç вăхăтне тĕрлĕ сведенисем пухса, отчетсем çырса ирттереççĕ. Социализмла ăмăртăва ертсе пырас тĕлĕшпе уйрăмах вăрман тата сулă юхтаракан рабочисен, вырăнти промышленноçри рабочисен профсоюзĕн обкомĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртас пулать.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Парти, совет, хуçалăх, профсоюз, комсомол организацийĕсен задачи çакă пулать: социализмла строительствăн пур участокĕсенче те ăмăртăва анлăн сарса пымалла, малта пыракансемпе новаторсен ĕçри лайăх тĕслĕхĕсене тата малалла кайма пулăшакан пуçарăвĕсене пĕтĕм вăйпа пулăшмалла, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшас тесе малта пыракан опыта мĕнпур ĕçсыннисен массисем хушшинче çине тăрса сарса пымалла», терĕ.

Республикăри парти, совет, профсоюз, хуçалăх тата комсомол организацийĕсен социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла.

З. БЕЛОВА,

КПСС обкомĕн промышленноçпа транспорт пай заведующийĕн заместителĕ.

Румынире И. В. Сталин ĕçĕсене пичетлесе кăларни

БУХАРЕСТ, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăлла литература издательстви И. В. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине румынла виççĕмĕш хут пичетлесе кăларнă. Çак издательствах И. В. Сталин юлташ Пĕтĕм Союзри колхозник-ударниксен пĕррёмĕш съездĕнче тухса каланă сăмаха уйрăм кĕнеке туса румынла пичетлесе кăларнă.

Кĕнекесен тиражĕ—30-шар пин экземпляр.

Берлинра совет воинĕсен памятникĕсем умне чечек кăшăлĕсем хунă

БЕРЛИН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕç халăхне Совет Çарĕ гитлерла фашизм пусмăрĕнчен хăтарнăранпа 8 çул çитнĕ ятпа, Берлинăн çапăçса вилнĕ совет воинĕсен памятникĕсем умне паян Берлинра чечек кăшăлĕсем хунă.

Хĕвеланăç Берлинăн Англи секторне кĕрекен Тиргартенра Совет Союзĕн Германири Контроль Комиссийĕн председателĕ ячĕпе, председатель çумĕнчи политикăлла советник ячĕпе, Совет Союзĕн Германири оккупаци çарĕсен ушкăнĕ ячĕпе, Совет Союзĕн Германири Контроль Комиссийĕнче ĕçлекен сотрудниксен ячĕпе, Польшăпа Чехословаки çар миссийĕсен ячĕпе, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Берлинри халăх ячĕпе чечек кăшăлĕсем çĕр ытла хунă.

Паян çавăн пекех тата Берлинăн совет секторне кĕрекен Трептов-паркĕнче тата Панковăра совет воинĕсен памятникĕ умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Чехословакие ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарнă ятпа Прагăра пулнă савăнăçлă лару

ПРАГА, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакие Совет Çарĕ фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă ятпа Прагăра савăнăçлă лару пулса иртнĕ.

Президиум сĕтелĕ хушшине республика президенчĕ Антонин Запотоцкий, правительство членĕсем, премьер-министр Вилем Широкий тата Наци пухăвĕн председателĕ Олдржих Йон тухнă чухне ларăва пухăннисем тăвăллăн алă çупнă.

Савăнăçлă ларура Совет Союзĕн Чехословакири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Послĕ А. Е. Богомолов, Китай правительствин делегацийĕн членĕсем, Государство администраци советĕн финанспа экономика комитечĕн председателĕн заместителĕпе Ли Фу-чуньпе пĕрле, туслă çĕршывсен посолĕсемпе посланникĕсем, государствăпа партин паллă деятелĕсем тата столицăри ĕçсыннисем пулнă. Савăнăçлă ларăва Олдржих Йон уçнă.

Совет Çарĕ Чехословакие ирĕке кăларнăранпа 8 çул çитни çинчен премьер-министр Вилем Широкий сăмах каланă.

Вăл сăмах каланă чухне ларура пулнисем Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинчи туслăха, Совет Правительствине чылайччен тăвăллăн алă çупнă. [Note: last line reads "чыласа тĕмисçе хутчен тăвăллăн алă çупнă"]

Китайри промышленность строительстви

ПЕКИН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри промышленность предприятийĕсенче Китайри Коммунистсен партине туса хунăранпа 32 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. «Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Аньшаньра металлурги комбиначĕ тăвас ĕç ăнăçлă пырать. Плана ирттерсе тултарассишĕн 60 пин строитель ăмăртса ĕçлет. Кăçал иртнĕ сулхинчен икĕ хут нумайрах ĕç туса ирттермелле. Иртнĕ çулта прокатсем тăвакан завод, тимĕр трубасем тăвакан заводсем тума пуçланă. Вĕсене тунипе пĕрлех, листаллă тимĕр тăвакан цеха, 7-мĕш домна кăмакине, хурçă шăратакан 1-мĕш цеха тата прокат цехне реконструкцилес ĕç вăйланса пырать. Заводсемпе цехсене малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ.

Аньшаньра металлурги комбиначĕ тăвакан строительсем, тесе çырать хаçат, аслă Совет Союзĕнчен техника тĕлĕшпе пысăк пулăшу илсе тăраççĕ. Строительствăри тĕп ĕçсене Совет Союзĕнчи малта пыракан техникăлла нормăсем тăрăх туса пыма палăртнă. Тĕп оборудовани вăл—Совет Союзĕнчен килсе тăракан чаплă автоматсем. Аньшаньри металлурги комбинатне тăвас ĕçе çĕршыври 40 ытла завод хутшăнать.

Албани ялĕсенчи культурăлла ĕç

ТИРАНА, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Албани ялĕсенче вулав çурчĕсем, культура çурчĕсем тата район центрĕсенчи библиотекăсем культура ĕçĕн центрĕсем пулса тăраççĕ. Албанире вулав çурчĕсем 200 ытла шутланаççĕ. Вĕсем кăçалхи çулăн пĕррёмĕш кварталĕнче 10.500 лекци, концерт тата ыттисем те ирттернĕ. Ялсенче докладсем ирттерме пулăшас тĕлĕшпе район центрĕсенче лекторсен бюровĕсем уçнă. Ялсенче пĕррёмĕш пилĕк çуллăх план çинчен, ялхуçалăхне улăштарса çĕнетесси çинчен, Совет Союзĕнчи колхозсен çитĕнĕвĕсем çинчен, Мичурин вĕрентĕвĕ çинчен тата ыттисем çинчен те лекцисемпе докладсем ирттереççĕ.

Культура çурчĕсем ялсене культура бригадисем яраççĕ. Вăл бригадăсем хăйсемпе пĕрле фотовыставкăсем, куçса çÿрекен библиотекăсем, çавăн пекех тата каласусем, вулавсем, лекцисем ирттерме материалсем илсе çÿреççĕ. Культура бригадисем кăçалхи пĕррёмĕш кварталта докладсем, культура вечерĕсем 800 яхăн ирттернĕ, 100 ытла выставка организациленĕ. Ялсенче кино ытларах кăтартма пуçланă.

Венгрири „Мир поезчĕ“

БУДАПЕШТ, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири Мир Совечĕ тата Венгрири чугун çулсен Политотделĕ «Мир поезчĕ» организациленĕ. Поезд вагонĕсенче «Пирĕн тăван çĕршыв — мир çĕршывĕ» ятлă выставка тунă. Выставка Венгрири социализм стройкисем çинчен, Венгри халăхĕн мирлĕ ĕçĕсем çинчен, миршĕн тăракансен юхăмĕ ÿссе пыни çинчен каласа парать. Çак выставкăна ку таранччен 20 пин çын ытла пырса курнă.

«Мир поезчĕ» çинче ĕçлекен работниксен коллективĕ кăçал Будапештра пухăнакан Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессине хатĕрленес тĕлĕшпе вырăнти работниксене пысăк пулăшу парать.

Цейлонпа Китай Халăх Республики хушшинчи суту-илу

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи çулăн малтанхи виçĕ уйăхĕ хушшинче Цейлон хăй туминичен Китая 10 миллион рупий (750.000 кĕренке стерлинга яхăн) тавар ытларах сутнă.

1953 çулхи иккĕмĕш кварталта Китайпа Цейлон хушшинчи суту-илу тата ытларах вăйланмалла. Китай халăхĕ ĕнтĕ Цейлонран 17.500 тонна каучук туяннă.

АРАБ ÇĔРШЫВĔСЕНЧИ ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН КАНАШЛĂВĔНЧЕ

КАИР, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Каирта тăваттăмĕш кун ĕнтĕ 8 государствăн — араб çĕршывĕсем кĕрекен Лига членĕсен—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пырать. Вăл Лигăн политикăлла комитечĕн сессийĕ вырăнне пулса иртет. Канашлура майăн 9-мĕшĕнче Суэц каналĕн зонинчен Англин хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтĕмпех илсе тухса каймалла тăвас тĕлĕшпе Египет лартнă требованине ырлама йышăннă. Резолюцире çапла каланă: «Ют çĕршыв çарĕсене Египет территорийĕнчен пĕр хирĕçсĕ тăмасăр илсе тухса каймалла тăвасси Египетăн правительствин пĕри пулнине, Египет ыйтăвĕ мĕнпур араб çĕршывĕсене тивнине шута илсе, араб çĕршывĕсен Лигин политикăлла комитечĕ тăвăлла çĕршыв—Египет майлă тăни çинчен тата тепĕр хут пĕлтерет».

ИРАН МЕДЖЛИСĔНЧЕ

ТЕГЕРАН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян меджлисăн уçă ларăвĕнче «Наци юхăмĕн» фракцийĕ шах полномочисене пÿлсе хумалла тăвас тĕлĕшпе «саккăр çынтан уйăрнă комисси» докладне сÿтсе явма требовани лартнă. Анчах лару пурĕ те темиçе минут хушши кăна пынă. Лару оппозици депутачĕсем хирĕçнине пула хупăннă. Оппозици депутачĕсем хăйсене йĕркесĕр тыткаланă пирки депутатсем пĕр-пĕрринпе çапăçма, курма пынисем ларакан вырăнта пĕр-пĕринпе тÿпелешме пуçланă. Пĕрисем — премьер-министр Мосаддык майлă, теприсем — «Иранри ĕççыннисен партийĕ» текен партин лидерĕ Багаи майлă пулнă. Пĕр депутата амантнă.

Çитес лару майăн 12-мĕшĕнче пулмалла.

ДЕМОКРАТИЕ ХИРĔÇЛЕ ÇĔНĔ ЗАКОН ПРОЕКЧĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США юстици министрĕ Брануэлл сената тата представительсен палатине закон проекчĕ тăратнă. Унта телефон тăрăх çынсем каласнине вăрттăн итлесе пĕлнĕ материалсемпе федеральнăй судра усă курассине законлă ĕç вырăнне йышăнасси çинчен каланă. Çакăн пек тума кирли, тенĕ закон проектĕнче, «наци хăрушсăрлăхĕшĕн» тата оборона интересĕсемшĕн кирлĕ.

Америка охранки телефонпа çынсем мĕн каласнине тахçантанпах вăрттăн итлет. Çак закон проектне çирĕплетни вăл—йăлана кĕнĕ юрăхсăр йĕркене законлă ĕç тесе йышăнтарма тăрăшнине пĕлтерет.

Чилири халăх йышĕ

БУЭНОС-АЙРЕС, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Латинла Америкăри агентство çапла пĕлтернĕ: Чилири статистика управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Чилире юлашки перепись вăхăтĕнче халăх йышĕ 5.930.809 çын шутланнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ майăн 9-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче фронтсенче пĕлтерĕшлĕ улшăнусем те пулман.

Халăх çарĕн зенитчăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче пĕлтерĕшлĕ улшăнусем те пулман.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан каласусем

ПЕКИН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Паян Корейăпа Китай делегацийĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

Майăн 10-мĕшĕнчи ларура Корейăпа Китай делегацийĕн главнăй делегачĕ генерал Нам Ир тепĕр енĕ майăн 9-мĕшĕнче панă ыйтусем çине ответ панă.

Генерал Нам Ир çапла каланă:

1. Эпир çакăн пек туни питех те тĕрĕс пулать, тесе шутлатпăр: репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй çĕршывсен представителĕсенчен уйăрнă комисси аллинче палăртнă вăхăт хыççăн та юлма пултаракан тыткăнри çар çыннисен кун-çулĕ çинчен тăракан ыйтăва консультаци йĕркипе татса пама аслăрах представительсен политикăлла конференцине памалла. Тÿрех репатриаци туман тыткăнри мĕнпур çар çыннисене, интересленекен çĕршыв вĕсене ăнлантарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттернĕ хыççăн, вĕсем ыйтнă тăрăх, репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комисси вĕсене палăртнă срокра хăйсен килĕсене таврăнма парассине сирĕн енĕ шута илет пулсан, репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комисси аллинче тăракан тыткăнри ытти çар çыннисем çинчен ыйту туса тăма та пултараймасть. Тÿрех репатриаци туман тыткăнри çар çыннисене нейтральнăй государство аллине панă хыççăн тата интересленекен çĕршыв вĕсем хушшинче тивĕçлĕ ăнлантару ĕçĕсем ирттернĕ хыççăн, хăрана пирки хăйсен тăван çĕршывне таврăнма килĕшмесĕр тăракан çынсем татах та пуласса ĕненме питĕ йывăр. Çавăнпа та сирĕн енĕ тыткăнри çар çыннисен татăклă кун-çулĕ çинчен хускатнă ыйту пачах та тухса тăмасть. Анчах та, сирĕн енĕ çак ыйтăва апрелĕн 16-мĕшĕнче ярса панă çырура хускатрĕ пулсан, эпир ку ыйту пирки çапла шутлатпăр: çакнашкал ыйту тухса тăрас пулсан, ăна аслăрах представительсенчен уйăрнă политикăлла конференци кăна татса пама пултарать. Аслăрах представительсенчен уйăрнă политикăлла конференци çак ыйтăва тĕрĕс татса пама пултараймĕ тесе шутлама нимĕнле сăлтав та çук.

2. Репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен, нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрнă комиссин влаçĕ çинчен тăракан ыйтăва илес пулсан, эпир майăн 7-мĕшĕнче панă сĕнÿ çаксене шута илет: пĕррёмĕшĕнчен, çак комиссин вăхăтлăха хăйĕн юрисдикцийĕнче тăракан тыткăнри çар çыннисене контроль туса тăма кирлĕ чухлĕ пысăк власть пулмалла. Сирĕн енĕ майăн 6-мĕшĕнче мĕнпур тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе администрациллĕ ĕçсене тата хурала контроль туса тăма кирлĕ чухлĕ пысăк власть пулмалла тенĕччĕ. Ку вăл çавнах пĕлтерет.

Иккĕмĕшĕнчен, репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен, нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрнă комиссин тыткăнри çар çыннисене хăйĕн аллине илнĕ хыççăн 4 уйăх хушшинче интересленекен çĕршывсене кайсен представителĕсене тыткăнри çар çыннисем хушшинче тивĕçлĕ ăнлантару ĕçĕсем ирттерме халĕхи вăхăтра тыткăнри çар çыннисем тăракан вырăнсене ярса тăма май памалла.

Виççĕмĕшĕнчен, тÿрех репатриаци туман, анчах хăйсен тăван çĕршывне таврăнма ыйтакан мĕнпур çар çыннисене хăвăртрах хăйсен тăван çĕршывне таврăнса памалла тăвассишĕн çак комисси ответлă пулса тăрать.

3. Репатриаци тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрнă комиссипе ăна пăхăнса тăракан органсен процедура правилисем çинчен тăракан ыйтăва илес пулсан, эпир çапла шутлатпăр: çÿлте асăннă функцисемпе обязанноçсене пурнăçа кĕртнĕ чухне çак комиссипе тата ăна пăхăнса тăракан органсенче нимĕнле тавлашу та тухас çук. Анчах мĕнле те пулсан тавлашу тухсан, решение ытларахăш сасăпа йышăнмалла.

4. Сирĕн енĕ хускатнă ытти ыйтусене илес пулсан, вĕсем пуринчен ытла пĕчĕкрех ыйтусем çинчен калаççĕ. Пирĕн енĕ майăн 7-мĕшĕнче кăларса тăратнă сĕнÿри тĕп ыйтусем тăрăх икĕ енĕ те калаçса татăлас пулсан, вăл ыйтусем тăрăх икĕ енĕ те тĕрĕслĕх никĕсĕ çинче калаçса татăлма пултараççĕ. Кунсăр пуçне тата çак ыйтусем вĕсем татса памалла мар ыйтусем пулса тăмаççĕ, мĕншĕн тесен репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комисси 5 нейтральнăй государствăн представителĕсенчен тăрать. Çак ыйтусене, тĕрĕссипе илсен, перемири çинчен тăвакан килĕшÿвĕн условийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăма нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрнă комиссипе ăна пăхăнса тăракан органсен положенийĕсенче икĕ енĕшĕн те килĕшÿллĕн татса панă».

Генерал Нам Ир çапла кăтартса панă: «Тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан ыйтăва хăвăртрах татса памалла тăвас тĕллевпе тата Корейăра перемири туса хурас тĕллевпе пирĕн енĕ майăн 7-мĕшĕнче тăратнă сĕнÿре сирĕн енĕ малтанлăха кăларса тăратнă условисене йышăнчĕ, тÿрех репатриаци туман тыткăнри çар çыннисене Корейăра хăварассипе килĕшрĕ. Эпир çапла шутлатпăр: умра тăракан ыйтусене халех конкретлă сÿтсе явма тытăнас шутпа, икĕ енĕн те эпир майăн 7-мĕшĕнче тăратнă сĕнÿре асăннă тĕп ыйтусем пирки хăвăртрах калаçса татăлас пулать».

Паянхи ларура тепĕр енĕ каллех чылай ыйтусем панă, анчах та Корейăпа Китай делегацийĕ майăн 7-мĕшĕнче хускатнă ыйтусем пирки хăйĕн шухăшне каласа паман.

Делегацисен çитес ларăвне икĕ енĕ те майăн 11-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре ирттерме йышăннă.

Юрă уявне хатĕрленесси

Кăçал пирĕн республикăра юрă уявĕ пулать. Уява хатĕрлесе ирттерес тĕлĕшпе республикăри комисси чылай ĕçсем тума палăртнă.

Майăн 20-мĕшĕнче Шупашкарта районсемпе хуласенчи юрă уявне ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕсен канашлăвĕ пулса иртет. Майăн 23—25-мĕшĕсенче районсемпе хуласенче хор коллективĕ руководителĕсен семинарĕсем пулаççĕ. Вĕсене ирттерме Шупашкартан искусство работникĕсем каяççĕ.

Çавăн пекех республикăри комисси районсемпе хуласенчи юрă уявĕнче юрламалли пĕрлешÿллĕ хорсен репертуарне çирĕплетнĕ. Вăл репертуара Совет Союзĕн Гимнине, Ф. Лукин композиторăн «Пире Сталин ырлăх пачĕ», Г. Хирбюн «Пирĕн юрă янратăр ялан», Г. Лебедевăн «Сталинград», С. Заславскин «От Волги до Дона», С. Туликовăн «Мы за мир» юррисене кĕртнĕ. Ку юрăсене уйрăм листовкăсем çине çапса, хор коллективĕсене ярса параççĕ. Çавăн пекех çак юрăсене республикăри радиовещани станцийĕ тăрăх вĕрентеççĕ.

Районсемпе хуласенче юрă уявне кăçалхи июнĕн юлашки кунĕсенче ирттерме палăртнă. Шупашкарта юрă уявĕ июлĕн 5-мĕшĕнче пулать.

Культура работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнче

Политпросвет учрежденийĕсенче, полиграфи производствипе пичет органĕсенче ĕçлекенсен тата искусство работникĕсен профсоюзĕсен обкомĕсен пĕрлехи пленумĕ пулса иртнĕ. СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ Аслă вĕренÿ министерствине, Кинематографи министерствине, Искусство ĕçĕсен комитетне, Радиоинформаци комитетне, Главполиграфиздата тата Ĕç резервĕсен министерствине пĕрлештерсе пĕр министерство—СССР Культура министерстви тума йышăннă. Çавна май профсоюзсем пĕрлешнĕ, культура работникĕсен профсоюзĕ туса хунă.

Профсоюз обкомĕсен пĕрлехи пленумĕ республикăра Культура работникĕсен профсоюз обкомне тума йышăннă, обком президиумне суйланă. Пленум обком председателĕ пулма А. Чиркова юлташа, обком секретарĕ пулма А. Сергеева юлташа суйланă.

Культура работникĕсен профсоюзĕ политпросвет учрежденийĕсенче, полиграфи производствипе пичет органĕсенче ĕçлекенсене, искусство работникĕсене тата ялхуçалăх институчĕпе тĕпчев институтĕнче ĕçлекен научнăй работниксемпе служащисене пĕрлештерсе тăрать.

КОЛХОЗ ТЕАТРĔН ÇУЛЛАХИ ГАСТРОЛĔСЕМ

Чăвашсен республикăри куçса çÿрекен колхоз театрĕ кăçал çуллахи сезона майăн 4-мĕшĕнче пуçларĕ.

И. Кудянов ертсе пыракан бригада Болгари драматургĕ, Димитровла премине илме тивĕçлĕ пулнă Орлин Василев çырнă «Сĕр çинчи рай» драмăпа гастроле тухса кайрĕ. Бригада Тутар республикинчи Чистополь районĕнчи чăваш ялĕсенче пулса спектакльсем лартать.

Г. Митрофанов ертсе пыракан бригада майăн 9-мĕшĕнче гастроле тухса кайрĕ. Ку бригада Тутар, Пушкăрт республикисенчи, Ульяновск, Куйбышев облаçĕсенчи чăваш ялĕсенче пулать. Унта А. Волковăн «Ксения», Л. Агаковпа Л. Родионов çырнă «Ылтăн вăчăра» пьесăсене лартса парать.

Е. ВАСИЛЬЕВ.

ПАРНИКРИ ПАХЧА ÇИМĔÇ

СОВЕТСКИ. Жданов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн парникĕсенче помидор, арбуз, дыня, купăста калчисем питĕ лайăх ÿсеççĕ. Вĕсене çак кунсенче йăрансем çине кăларса лартма пуçлаççĕ. Парникре ÿстернĕ симĕс сухана кăларса сутнă. Чăсах пĕррёмĕш хут хăяр пуçтарса илеççĕ.

В. АЛЕКСАНДРОВ.

Тăрăшса ĕçлекен продавец

СЕНТĔР. Калайкасси ялĕвне кĕрекен Шомикри магазинра А. Бычков юлташ виллĕкмĕш çул продавец пулса ĕçлет. Вăл таварсем сутмалли плана уйăхран уйăха ирттерсе тултарать. Кăçалхи пĕррёмĕш квартал планне 127 процент, пай укçи пухмалли задание 101 процент, çăмарта хатĕрлемелли задание 110 процент тултарнă. Апрель уйăхĕнчи задание пур енĕпе те 120 процент тултарнă.

В. ИГНАТЬЕВ.

АГРОНОМ КАНАШĔ

Кукуруза—силос тумалли паха культура

Кукуруза силос тумалли чи паха йышши ÿсентăрансенчен пĕри шутланать. Çак культурăран кашни гектар пуçне 300-шер центнер силос курăкĕ туса илме пулать.

Кукурузăн симĕс тунисемпе çулçисенче сахăр, выльăх-чĕрлĕх организмне кирлĕ ытти япаласем те нумай. Çав сахăр силос массине сĕтеклентерме май парать. Çавăнпа та кукурузăран тунă силоса выльăхсем питĕ юратса çиеççĕ, унпа тăрантарсан самăраççĕ.

Кукурузăран ытларах силос тума май пултăр тесен, ăна акса ÿстермелли тата пухса кĕртмелли йĕркесене лайăх пĕлес пулать. Çав йĕркесене пĕлмесĕр ĕçлесен, унăн тухăçлăхĕ чакма пултарать.

Çак хаклă культурăна пирĕн республикăра массăллăн акса тума май пур. Эпир кунта кукурузăна акса, пăхса ÿстермелли тата пухса кĕртмелли майсем çинчен кĕскен каласа паратпăр.

Акмалли вырăн. Силослăх акакан кукуруза валли лайăх çемçетнĕ вырăн суйласа илмелле. Силослăх кукурузăна выльăх апачĕ акса тумалли пусă çаврăнăшĕнче е ферма таврашĕнчи участокра аксан аванрах, мĕншĕн тесен ун пек çĕрсене ытларах çемçетме май пур.

Кукурузăна малтанхи çулне викăпа сĕлĕ хутăш акса илнĕ вырăна акма юрать. Уй-хирти пусă çаврăнăшĕнче акма шутласан, кукурузăна кĕрхи культурăсем хыççăн акас пулать.

Пирĕн республикăра мĕнпур çĕрулмирен 70 процентне кĕрхи тырăсем акса тунă вырăна лартаççĕ. Çĕрулмипе пĕр уйрах кукуруза та акса илме пулать.

Тăпрана хатĕрлесси. Кукурузăн тымарĕ аван аталанать, вăл тăпра ăшне чылай тарăн кĕрет. Çавăнпа та кукуруза акмалли вырăна тарăн сухалас пулать.

Кукуруза умĕнхи культурăна вырса илнĕ хыççăн унăн хăмăлне 3—4 сантиметр тарăнăш сухаласа пăрахаççĕ. Сухаланă хыççăн, çумкурăк шăтса тухсан, вăл вырăна тепĕр хут 20—22 сантиметр тарăнăш е унтан та тарăнрах сухалаççĕ.

Малтан çĕрулми лартса илнĕ уя кукуруза акас пулсан, вара вăл вырăна çĕрулми пухса илсен тÿрех тарăн сухалас пулать. Ун пек чухне вăл лаптăка çуркунне ирех сÿрелемелле. Сÿрелени тăпрари нÿрĕне тытса хăварма пулăшать. Сÿреленĕ хыççăн икĕ хутран кая мар культиваци тăвас пулать. Культиваци тумасан, акмалли вырăнта çумкурăксем шăтма пултараççĕ.

Удобренисем парасси. Кукуруза—питĕ парка ÿсекен тырă. Тунисемпе çулçисем ытларах ÿсчĕр тесен, кукурузăна кирлĕ апатсене нумайрах пама тăрăшас пулать. Кĕрхи çĕртме сухи тăвас умĕн кукуруза акмалли вырăна удобренисем ытларах сапмалла. Çĕртме тунă чухне кашни гектар çине 20—30-шар тоннăран кая мар тислĕк тăкмалла е 15—20-шер тонна тислĕк шĕвекĕ сапмалла.

Вырăнти удобренисем вырăнне минераллă удобренисемпе те усă курма юрать. Ун пек чухне кашни гектар пуçне 1,5—2-шер центнер суперфосфат, пĕрер центнер кали тăварĕ (е ун вырăнне 4—5-шер центнер кĕл), 1,5—2-шер центнер аммони сульфачĕ сапас пулать.

Минераллă удобренисене кĕрхи çĕртме тунă чухне е акас умĕн юлашки хут культиваци тунă чухне хываççĕ.

Кукуруза чылай вăхăт хушши ÿсет. Çавăнпа та ÿснĕ вăхăтра ăна 1—2 хутчен апат памалла. Чи малтанах, калча шăтса тухсан удобренисем параççĕ. Ун чухне кукуруза уйне кашни гектар пуçне пĕрер центнер суперфосфат тата 2—3-шер центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ е 10-шар центнер тислĕк шĕвекĕ сапмалла. Пуç кăларас умĕн кукурузăна тепĕр хут апат параççĕ. Иккĕмĕш хутĕнче кашни гектар пуçне çакăн чухлĕ удобрени илес пулать: 0,4—0,6-шер центнер аммиак селитрĕ, çавăн чухлех—кали тăварĕ, 2—2,5-шер центнер суперфосфат, 2—3-шер центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ. Çав удобренисене кукуруза ретĕсем хушшинчи тăпра ăшне 8—10 сантиметр тарăнăш хываççĕ.

Вăрлăх хатĕрлесси, акасси. Кукуруза вăрлăхне гранозанпа е АБ препаратпа хутăштарса акаççĕ. АБ препаратпа хутăштарас пулсан, пĕр тонна вăрлăх пуçне 1,5 килограмм препарат кирлĕ. Пĕр килограмм гранозана пĕр тонна кукуруза вăрлăхĕпе акас умĕн 3—4 кун маларах хутăштармалла. Акнă вăрлăха проволочник текен хуртсем сиен кÿме пултараççĕ. Çавăнпа та вăрлăха гексахлоранпа хутăштарас пулать (1,5 килограмм гексахлоран çăнăхĕ пĕр тонна вăрлăха «çăнăхлатма» çитет).

Кукуруза ăшша юратать. Унăн вăрлăхĕ 10—12 градус ăшăра кăна шăтма пултарать. Пирĕн патра тăпра май уйăхĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче кăна çавăн чухлĕ ăшăнса çитет. Кукуруза вăррине çав вăхăтра акма пуçламалла.

Силос валли акнă чухне кукурузăна сарлака ретпе, ретсем хушшине 60-шар сантиметр хăварса акаççĕ. Пĕр гектар çине 30—35-шер килограмм вăрлăх акас пулать. Вăрлăха 8—10 сантиметртан тарăн акмалла мар. Кукурузăна пĕрчĕллĕ тырăсем акмалли сеялкăсемпех акаççĕ.

Калчасене пăхасси. Кукуруза вăррине типĕ çанталăкра акнă пулсан, вăл вырăна катокпа якатаççĕ. Çапла тикĕслентерни нÿрĕке тăпрара тытса тăма пулăшать. Каярахпа вара рете урлă сÿрелесе тухмалла.

Çамрăк калчасене хура куракснчен тимлĕн сыхлас пулать. Кураксем çамрăк калчасене тĕпĕ-йĕрĕпе тăпăлтараççĕ, вĕсем питĕ пысăк сиен кÿме пултараççĕ.

Кукуруза калчин 4—5 çулçă тухсан, рет хушшисене 8—10 сантиметр тарăнăш кăпкалатмалла. Ун хыççăн каллех, кашни 15—20 кунтан кăпкалатса тăмалла. Иккĕмĕш хутĕнче—7—8 сантиметр тарăнăш, виççĕмĕш хут 5—7 сантиметр тарăнăш кăпкалатмалла. Ку ĕçе «ТК-17» йышши культиваторпа тума пулать.

Малтанхи 3—5 çулçă тухсан, кукуруза калчисене сайралатмалла пулать. Ун чухне çакна астумалла: калчапа калча хушши 15—20 сантиметр хушши юлтăр. Кăпкалатнипе пĕрлех, çумкурăкне вăхăтра тасатса тăни кирлĕ.

Пухса кĕртесси. Силос валли акнă кукурузăна вăрă тытăнса çитсен жнейкăсемпе тата лобогрейкăсемпе выраççĕ. Вырнă чухне хăмăла 6—7 сантиметртан ытла хăвармалла мар, унсăрăн симĕс апат хăмăла юлма пултарать. Вырнă кукурузăна вара çав кунах силос тума хывас пулать.

Вăрлăх тăвасси. Пирĕн республикăри колхозсем пурте хăйсене кирлĕ таран кукуруза вăрри акса тума пултараççĕ. Вăрлăхлăх акас ĕçе силос валли акнă пекех туса ирттермелле. Анчах та шăтнă калчасене урăхларах пăхмалла пулать. Вĕсене сайралатнă чухне калчапа калча хушшине 30—35 сантиметр вырăн хăвармалла (пирĕн республика условийĕсенче 20—25 сантиметр хăварсан та çитет). Вăрлăхлăх кукурузăн аялти ытлашши турачĕсене иртсе тăмалла. Шăтнă çемĕн вĕсене çурлапа е çĕçĕпе касса пăрахмалла.

Кукурузăна икĕ хутчен шăркалантарма тăрăшас пулать. Ытларах шăркалантарни вăрлăх тухăçлăхне чылай ÿстерет.

Кукуруза пулса çитсен унăн пуçĕсене типĕтсе ярăмăн-ярăмăн сыхса çакаççĕ. Вăл ярăмсене сивĕ мар пÿлĕмре усрамалла. Çуркуннепе вара, акас умĕн кукурузăна шĕкĕлчеççĕ.

Пирĕн республикăра ирттерех ĕлкĕрекен кукуруза сорчĕсем тухăçларах пулаççĕ. Иртерех пулакан сортсенчен çаксене кăтартма пулать: «первенец», унăн пĕрчисем шупка-сарă тĕслĕ, вĕтĕрех, пуçĕсем 11—12 сантиметр тăршшĕ пулаççĕ. Çитĕнесси 80 сантиметр таран ÿсет. Ку сорт 90—100 кунта ÿссе, пиçсе çитет; «белоярое пшено», ку сортăн пĕрчисем кĕрен-хĕрлĕ тĕслĕ, вĕтĕ, пуçĕсем 10—12 сантиметр таран пулаççĕ. Кукуруза тунин çÿлĕшĕ—70—80 сантиметр таран пулать, 90—100 кунтан пĕтĕмпех пулса çитет; «минусинская» текен сортăн та пĕрчисем вĕтĕ, сарăрах хĕрлĕ тĕслĕ пулаççĕ. Вăл пĕр метр çÿлĕш ÿсет, унăн пуçĕсем 11—12 сантиметр вăрăмăш пулаççĕ. «Минусинская» текен кукуруза 90—100 кун хушшинче ÿссе, пĕтĕмпех пулса çитет.

Профессор Л. А. ПЕЛЬЦИХ.

ПĔЛТЕРНИ

Майăн 12-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене валли лекци пулать: «Партин XIX-мĕш съездне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен туса панă отчетлă доклад».

Лектор — А. Ф. Сютруков юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — вырăсла спектакльсем: майăн 12-мĕшĕнче «Вей, ветерок», майăн 13-мĕшĕнче «Твое личное дело». Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—майăн 12-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче ачасем валли кăларнă 31-мĕш киносборник; 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Завтра будут танцевать всюду».

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01381 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.